32—213

КОМУНИССЕН ПАРТТИН ЂĂВАШОПКОМĔ

# ПАРТТИН ЂУЛХУЛА КРАЙКОМĔН III-МĔШ ПЛЕНĂМĔ ЙЫШĂННĂ РЕСОЉУТСИСЕМ

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1932

Отпечатанно типографии № 1
Чувашгиза г. Чебоксары
Канашская, 16.

Ç. П. Петров

# ЙАЛХУÇАЛĂХА ХĂПАРТАССИШĔН, КОЛХОССЕНЕ ТĔРЕКЛЕТЕССИШĔН.

**(Партти Крайкомĕн 4-мĕш пленăмĕнђе авкустăн 28-мĕшĕнђе каланă сăмах).**

Йулташсем! Штанăв йулташ хăйĕн токлатĕнђе пирĕн крайри йалхуçалăхĕ мĕнле тăнине, йалхуçалăхне партти йенђен йертсе пырасси мĕнле тăнине пур йенђен те тĕрĕс хак пађĕ, çакăн пек хак панинђен вăл крайри партти орканисатси умĕнђе йалхуçалăхне хăпартас, колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенђен тĕреклетес тĕлĕшпе тăракан сатађсене кăларса тăратрĕ.

Крайри йалхуçалăха çакăн пек хак панипе Штанăв йулташ палăртнă сатађсем питех те тĕрĕс, вĕсем крайри пĕтĕм партти орканисатсине йалхуçалăх йенне татăклăнах çавăрăнма хушаççĕ.

Штанăв йулташ хăйĕн токлатĕнђе уйрăмах йалхуçалăхне хăпартассипе колхоссемпе колхоçнĕксен тупăшне ӳстерессе çинђе ђарăнса тăђĕ.

Ку тĕрĕс. Мĕншĕн тесен йалхуçалăх ӳсĕмĕн хађхи вăхăтри хăвăртлăхсем пĕрре те çителĕклĕ мар, вăл хăвăртлăхсем парттин пĕтĕм Сойусри 17-мĕш конферентсийĕ иккĕмĕш петтилеткăра ĕçхалăхне тĕп потрепиттĕл таварĕсене 2—3 хут ӳстерессе çинђен йышăннă решшенине пурнăçа кĕртме май памаççĕ, тата хăвăрт ӳссе пыракан интустрине ђĕрĕ тавар тăратса çитереймест.

Йулташсем! Йалхуçалăх ӳсĕмĕн хăвăртлăхĕсем кайа йулса пынин сăлтавĕ мĕнре-ха? Йалхуçалăхне хăпартас ĕçĕн хăвăртлăхĕсем кайа йулнин сăлтавĕ вăл ĕçе урăхлатса çĕнетменни пулса тăраť. Епĕр йалхуçалăх тĕлĕшпе ĕçе пит те хуллен çĕнетсе пыратпăр. Партти Тĕпкомĕ кун çинђен пĕрре çеç кăтартса паман. Молăттăвпа Какановиђ йулташсем Украйнăри парттин 3-мĕш кон-

ферентсинҫе йалхуҫалăх ҫине ҫавrăнса пăхас ыйтăва вăйлатасссине поҫшевикла ҫивĕҫлĕхпе лартрĕҫ. Партти Тĕпкомĕ тырпула уйхиртен пухса кĕртес кампрани ҫинҫен йышăннă решшенире пĕтĕм парттийе „йалхуҫалăхĕ ҫине ҫавăрăнса пăхассине ĕҫре вăйлатма хушрĕ“. Штанăв йулташ хăйĕн токлатĕнҫе йалхуҫалăхне йертсе пырассинҫи пирĕн ҫитменлĕхсене уйрăмах ҫивĕҫҫĕн палăртрĕ, тата вăл ҫитменлĕхсене мĕнле пĕтермелли ҫулсене кăтартса паҫĕ.

Йалхуҫалăхне татăклăнах хăпартас пулсан, колхоссен, тата колхоçнĕксен тупăшĕсене ӳстерес пулсан, пирĕн йалхуҫалăх проиcвотствипе колхос строиттĕлствин технĕккине хамăр алла ҫавăрса илмелле. Халĕ пирĕн йалта мĕн ҫĕнни пуррине ăнланса илмелле, ҫак ҫĕнĕ йапалана колхоçнĕксен, тата уйрăм хуҫалăхлă ĕҫхресҫенĕсен ăнланăвне кĕртмелле. Хаҫхи тапхăрта йалта пур ҫĕнĕ тапхăра ăнланса илмелле. Пирĕн йалта мĕн ҫĕнни пур-ха? 1929-мĕш ҫула илĕпĕр. Сталин йулташ 1929-мĕш ҫулта акрарнĕк-маркçиссен конферентсинҫе пирĕн малалла сотсиалисăмла шултра интустрийе вак, сапаланҫăк пĕҫҫенлĕх хуҫалăх никĕсĕ ҫинҫе илсе пыма май ҫук тесе каланă. Колхос йухăмĕ вăйлăн сарăлиҫҫен пирĕн йăвăрлăхсем пĕр тĕслĕрех пулнă.

Пирĕн умра хресҫенсен тĕп массине колхоспа совхос строиттĕлстви пур йенҫен те малта тăнине, вăл усăллине тĕплĕн ăнлантарса ĕнентерес сатаҫ тăҫĕ, мĕншĕн тесен, колхоспа совхос строиттĕлствисĕр йалхуҫалăхне хăпартма май ҫук. Хресҫенсен тĕп масси колхоссем пур йенҫен те усăллине ăнланса илнипе колхоса кĕҫĕҫ.

1929-мĕш ҫултанпа йалхуҫалăхне сотсиалисăмла урăхлатса ҫĕнетес ĕҫре епĕр пысăк ҫитĕнӳсем турăмăр. Кăҫалхи поҫшевикла ҫураки хыççăн Совет сойусĕ сотсиалисăм ҫулĕ ҫине татăклăнах тĕрекленсе тăҫĕ. Ҫуртри акнă ҫĕр лаптăкĕнҫен $^4/_5$ пайне сотсиалисăмла пай ҫавăрса илнĕ, пĕтĕм ҫухăнпа вăтам хресҫенсенҫен 60 проҫăн ытла колхоссене пĕрлешнĕ. Епĕр акмалли ҫĕр лаптăкне ҫылай ӳстертĕмĕр, йалхуҫалăхне ҫĕнĕ технĕккăлла пысăк машшинсемпе хĕçпăшаллантаратпăр. Парттин

ленинла политтёкне гёрёс пурнăçа кёртсе пынипе епёр ђылай крайсенђе, оплăçсенђе талкăшпе колхоса куçассине туса çитертёмёр. Çакăн тăрăх кулаксен класне пётертёмёр. Çаксем пурте пирён ума çёнё сатађсем лартаççё. Йалта сапаланђăк вак уйрăм хуçалăхсем пуç пулса тăнă вăхăтра, трактăрсем, компайнсем, тыр вырмалли, авăн çапмалли машшинсем пулман вăхăтра, унђухне йалхуçалăха йертсе пырассинђе пёр меслет пулнă. Халё ёнтё, ёçхресђенёсем колхоссене 60 прођăн ытла пёрлешнё, колхоссемпе совхоссем çёнё технёккăпа тунă пысăк машшинсемпе ёçленё, совхоссемпе колхоссем йалхуçалăх çимёçёсем тăвакан пысăк хапрăксем пулса тăнă вăхăтра йалхуçалăхне йертсе пырас ёçён майёсем йăлтах урăхла пулмалла. Йалта çёнё тапхăр, çёнё услови пулса тăђё. Анђах епёр йалхуçалăхне çёнёлле йертсе пыма халё те вёренсе çитеймен-ха. Партти органисатсинђен нумайёшё комуниссем нумайёшё йалта пулнă улшăнусене шута илмеççё, йалхуçалăха халё те кивёллех йертсе пыраççё.

Йалхуçалăха машинлатас, тата колхоссенђе ёçе органисатсилес ыйтусене илёпёр. Колхоссенђе ёçе органисатсилессинђе пётём вăй-хала хурса ёçленипе колхоçнёк ёçкунё мён иккене пёлекен турăмăр. Çакă вăл— ёçе органисатсилессинђе тунă тёп çитёнў пулаŭ. Анђах ку халё пёрремёш утăм çеç. Ёçкунё икё пайран—хисеплёхпе пахалăхран тăраŭ. Колхоçнёк ёçкунён хисеплёх йенне лайăх ăнланса илђё, халё вăл ёçкунён пахалăх йенёшён кёрешет. Çапла пулсан та, ёçкунён пахалăхне ăнласа илсех çитерейнмен-ха. Ёçкунёсене пăснине Ђăваш респуплёкёнђе пулнă фактсенђенех темён ђухлех илсе кăтартма пулаŭ: пёртанлăх, опеслиђкă, ёçкунёсене салатса пётерни, т. ыт. те пур çёрте пуç пулса тăраççё. Çапла ёнтё, епёр ёçкунёсене икё йенёпех хамăр алла çавăрса илмен-ха. Пирён колхоссенђе ёçе йалхуçалăхён çёнё йăвăр технёкки тăрăх органисатсилемелле. Парттин пётём Сойусри 17-мёш конферентсин решшенинђе иккёмёш петтилеткă пётнё çёре йалхуçалăх ёçне интустри ёçён тепёр тёслё йенё тумалла тесе каланă. Ку ёнтё колхоссенђе ёçе органисатсилес ёçре пирён умра мёнле

пысăк, тата йăвăр сатађсем тăни çинђен калаŤ. Квалфикатсиллĕ ăстаçсем, иншенерсем, технĕксем, пролеттариллĕ ватă катăрсем, вăйлă парторканисатси, парткоми профорканисатсиçем пур претприйаттисенђе те çĕнĕ технĕккăна пысăк йăвăрлăхсемпе пурнăçа кĕртмелле пулаŤ. Йалхуçалăх происвотствине çавăрса илесси хапрăк-савăтри технĕкка çавăрса илессинђен нумай йăвăр. Рапођђин, тата ăстаçăн технĕккăна çавăрса илес ĕçре хăнăхупа пĕлӳ пур. Рапођђисем хапрăк-савăтсенђе ĕçлесе тунă коллективлă ĕçĕн оппăђĕсем пур. Кунсăр пуçне тата машшинсем хăйсем те ĕçе орканисатсилекен вăйсем (хатĕрсем) пулса тăраççĕ. Кашни станок, кашни машшин рапођђийе çирĕп тистсиплинăллă тăваŤ, машшина хăйне мĕнле хăвăртлăхсем кирлĕ, вăл рапођђийе те çавăн пек хăвăртлăхсемпе çавăрăнкаласа ĕçлеме хушаŤ. Хапрăк-савăтсенђе станоксем вырăнта тăраççĕ, станоксенђе, машшинсенђе, конвейĕрсенђе ĕçлес тенхĕккăна çавăрса илсен нумай вăхăтлăха ĕç пĕр тĕслĕрехех пулаŤ.

Йалхуçалăхĕнђе ĕç йăлтах урăхла. Епĕр йалхуçалăхне сотсиалисăмла урăхлатса çĕнетес ĕçре кивĕ опђăлăх сыхăнăвне, йăлана, тата ĕç патне кивĕлле пынине тымарĕнђенех çĕмĕретпĕр.

Епĕр ĕç патне пырас кивĕ йăлана, ĕç патне пĕђђен пырса ĕçлессине, пин çул хушши хресђенсем ђĕре ăшне кĕнĕ йăвăç сухапуçĕпе ĕçлеме хăнăхнине, т. ыт. те çĕмĕретпĕр. Епĕр совхоссемпе колхоссене çĕнĕ технĕккă: трактăр, авăн çапмалли пысăк машшинсен, компайнсен т. ыт.никĕсĕ çинђе тăватпăр. Пирĕн ĕнер уйрăм хуçалăхлă пулнă, йăвăç сухапуçĕпе ĕçленĕ хресђене—пайанхи колхоçнĕке ертел ĕçне машшинсемпе, трактăрпа, компайнпа, авăн çапмалли машшинпа, йĕтĕн тыллакан машшинпа т. ыт. машшинсемпе ĕçлеме вĕрентмелле. Хресђен пĕђђен хуçалăхлă пулнă ђухне, сухапуçĕпе ĕçленĕ ђухне хресђен происвотствă хатĕрне хăйĕн ĕçĕн хăвăртлăхĕсемпе сыхăнтарса тунă, вăл ĕçе хăçан хăйне килĕшнĕ, çавăн ђух тунă, хăçан пăрахас килнĕ, çавăн ђухне пăрахнă.

Йалхуçалăха ушкăнпа тата машшинпа ĕçлени—орка-

нисатсиллĕ, тистсиплинăллă пулма, машшин технĕккине алла çавăрса илме тата ĕçвăйне тĕрĕс тăратса тухма хушаť. Пирĕн колхоçнĕксен промышлĕннăç технĕккинђен уйрăм тăракан йалхуçалăх технĕккине çавăрса илмелле.

Претприйаттисенђе станоксем вырăнтах тăраççĕ. Йалхуçалăхсенђе уй ĕçĕ вăхăтĕнђе машшинсем пурте ĕçлеççĕ. Çакăнтан ĕнтĕ йалхуçалăх происвотствин технĕккине алла илес, машшинсене пăхас ĕçре йăвăрлăхсем хутшăнаççĕ. Кунсĕр пуçне хађхи вăхăтра, пирĕн трактăрпа ĕçлессине лашапа ĕçлессипе, тыр вырмалли машшина—çурлапа, авăн çапмалли машшина—тăпађпа, машшинпа тырă акассине алăпа акассипе çыхăнтармалла т. ы. те.

Анђах ку пурте мар-ха. Пирĕн кашни йал, колхос економĕк, технĕккă, политтĕк тĕлĕшĕнђен мĕнле тăнине пĕлмелле. Пирĕн кашни колхосăн, йалăн çĕр условийĕ мĕнлине, акнă тырăсем мĕнле тăнине, выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç мĕнле тăнине пĕлмелле. Пирĕн вырăнти советпа колхос активне пĕлмелле, вĕсем çине тайăнса партти йертсе пынипе йала сотсиалисăмла çулпа урăхлатса çĕнетмелле.

Каланисемсĕр пуçне, промышлĕннăçпа танлаштарсан, йалта парторканисатси нађаррине, квалификатсиллĕ ăстаçăсем çуккине куратпăр. Акă мĕн çĕнни пур хађхи вăхăтра йалта. Çак çĕнĕ условисене нумайĕшĕ ăнланман, çакă йалта ĕçлесе ĕçе нађарлатасси патне илсе пыђĕ. Çакăн çинђен Ђăваш респуплĕкĕнђи ĕçсен ђылай фактăсем калаççĕ.

Район ђенттăрĕсене илĕпĕр. Районти орканисатсисем халĕ те йалхуçалăха сотсиалисăмла урăхлатса çĕнетессин ђенттăрĕсем пулса тăман тесе йышăнмалла. Районти орканисатсисем „воопђе" йертсе пыраççĕ. Кашни колхосăн, йалăн уйрăмлăхĕсене пĕлмеççĕ. Своткăсемпе çеç пурнаççĕ, ђĕрĕ çынсене, ђĕрĕ ĕçсене пĕлмеççĕ. Епĕр Ђăваш респуплĕкĕнђе тырпула уйхиртен пухса кĕртес кампани умĕн Опком пӳровĕ тата ОКК преçитиумĕ ђленĕсемпе районсене тĕрĕслессипе пур районсене те çавăрса илтĕмĕр. Çак тĕрĕслӳ пĕр районта та çумçумлас, утă çулса пуçтарас, йалхуçалăх машшинĕсене йусас,

тата ытти ĕçсем çинҫен тунă своткăсем ҫăн-ҫăн ĕç мĕнле тăнипе çыхăнманнине кăтартрĕ.

Йалхуçалăх машшинĕсене йусасси, пĕрҫĕ тытакан машшинсем, çĕртме туни çинҫен паракан светĕнисем ҫас-ҫасах ĕç ҫăннипе мĕнле тăнине кăтартмаççĕ. Йалхуçалăх машшинĕсене йусас ĕçĕн пахалăхĕ çинҫен нумай районсем аса та илмен. Машшинсене лайăх йусасси çине хытă çаврăнса пăхмалла пулнă, мĕншĕн тесен тырпула ăнăçуллă пуçтарса кĕрттерессси, ĕçĕн пахалăхне ўстерессси йалхуçалăх машшинĕсене лайăх йусанинҫен килет. Машшинсене тирпейлĕ пăхман пирки йалхуçалăх машшинĕсене наҫар йусанă пулнă. Тырпула пуçтарса кĕртнĕ ҫух пĕрҫĕсене тытмалли йешҫĕксем тăвасси çине малтанах нимĕн те çаврăнса та пăхман. Ыраш вырнă ҫух колхоссем нумайĕшĕ вăрăм ыраша машшинпа вырма май çук тесе шутланă. Тыр вырмалли машшина хирĕç кулак саракан акиттатсине вăхăтра тивĕçлĕ отпор паман, мĕншĕн тесен, районти орканисатсисем ку ĕçе вăхăтра палăртман.

Пирĕн районсем кашни йалăн, колхосăн екkономĕкпе технĕккине халĕ те пĕлмеççĕ-ха, колхосăн ăçта, мĕнле çĕрте, машшинсем мĕн ҫухлине, вĕсем мĕнлине, ылҫăхҫерлĕх ĕрҫетесси мĕнле тăнине, ылҫăх апаҫĕсем мĕнлине, акротехнĕккăна пурнăçа кĕртесси, çĕр мĕнле, ăна çемçетме мĕнле минерал çăнăхĕсем кирлине, кашни йалăн, колхосăн тырри мĕнле пулнине пĕлмеççĕ.

Тĕслĕхрен, районта ĕçлекенсем нумайĕшĕ хăшпĕр уйсенҫе мĕншĕн хытхура пулнине пĕлмеççĕ.

Малалла тата план ыйтăвне илĕпĕр. Йалхуçалăха планлас ĕç районти ĕçлекенсемшĕн ҫи ыратакан ыйту пулса тăрат. Кунта акакан çĕр лаптăкĕнҫен, уй çаврăнăшĕнҫен, колхоссен происвотствăллă планĕсенҫен пуçласа тырпул мĕн ҫул пухассине палăртассине çитиҫҫенех никам ăнланмалла мар, пăтратса аркашса пĕтни тем ҫухлех. Акмалли çĕрсене планланă ҫух колхоссен интересне патшалăх интересĕпе çыхăнтарма халĕ те вĕренмен. Районсем килĕшнипе куҫттурсем тăрăх акмалли ака планне ҫухăмăнах улăштараççĕ.

Малалла тырпул мĕн ҫул тухассине палăртас ĕçе

илĕпĕр. Ку ыйту вăл—еккономĕклĕ ыйту çеç мар, вăл политтĕклĕ ыйту. Епĕр тырă мĕн ђул тухассине палăртас ĕçе кирлĕ пек орканисатсилемен. Епĕр ку ыйтупа питĕ нађар ĕçлетпĕр, ĕçлетпĕр пулсан та тырпул хатĕрлевĕ вăхăтĕнђе кăна ĕçлетпĕр. Районта ĕçлекенсем çаксем çинђен мĕншĕн нимĕн те шарламаннине епĕ пĕлместĕп, йе вĕсен ку ĕçе пит те лайăх лартнă, йе çак ыйтусем патне халĕ те çывхарайман. Епĕр тырă мĕн ђул тухассине пĕлме авăн çапнинђен мĕн куратпăр-ха? Тырă мĕн ђухлĕ тухассине пĕлме авăн çапнă ђух нађар, вăтам, лайăх тырăран илсе çапаççĕ те, вара вăтам виçе тăваççĕ. Кунта лайăх, вăтам, нађар тырăллă çĕре хисепе илмеççĕ. Тырă мĕн ђул тухассине çакăн пек палăртни вăл—оппортунисла ĕç пулса тăрат, клас тăшманне усăллă ĕç. Çапла майпа епĕр нихçан та тырă мĕн ђул тухнине тĕрĕс пĕлме пултараймастпăр.

Тырă мĕн ђул тухнине лайăх пĕлес пулсан, тырпул мĕн ђул тухнине пĕлмелли ĕçĕн майне улăштармалла.

Тырпула хак парас тĕлĕшпе хресђенсен оппăтне вĕренмелле. Тырпула мĕн ђул тухнине пĕлмелли çулсем тем ђул та. Оппăтлă колхоçнĕк алла вăтам пулнă тыррăн пĕр кĕлтине илсенех тырă мĕн ђул тухассине пĕлме пултарат. Халĕ пирĕн тырра шута илсе çитерменни нумай. Тырра пытарма хăтланакан оппортуниссене çирĕп отпор памалла.

Йетĕрне районĕнђе тырпул хатĕрлев планне йалсемпе колхоссем тăрăх пăхса тухса йышăнсан, канашлусенђе йалсовет преçетаттĕлĕсемпе активсем колхоçнĕксем умне çакăн пек ыйту лартнă: есĕр тырпул хатĕрлев планне йышăнтăр, иккĕмĕш хут план памастпăр, ђăннипех ыраш мĕн ђул тухнине калăр.

Çак ыйтусене хирĕç колхоçнĕксемпе йалти активиссем ыраш 11—12 ђентнĕртен кайа тухман, тесе ответ панă. Районти орканисатсисем малтанлăха пĕр кектартан 9 ђентнĕр тухат тесе тунă. Ђăваш респуплĕкĕнђи тĕп оркăнсем Йетĕрне районне кектартан 9,5 ђентнĕр тухат тесе кăтартса панă, вырăнти актив пĕр кектартан ырă тухнине 1,5—2,5 ђентнĕр ÿстернĕ. Акă сире епĕр тырпул мĕн ђул тухнине пĕлессинђе колхоçнĕксен,

активиссен ĕçĕсене пĕлменни. Çавăнпа та планлас ĕç, тырпул мĕн ҫул тухнине пĕлес ĕçе, тырпул хатĕрлев планĕсене тăвас ĕçе т. ыт. те активсене нумайăн хутшăнтармалла, планлас ĕçри хамăр ĕç майсене улăштармалла. Çак ĕçе ҫăннипех пĕлме тата актива орканисатсилемелле.

Колхоссене, йалсене районсем йертсе пыни çинҫен Штанăв йулташ пит те тĕрĕс палăртрĕ, районсенҫе пĕтĕм ĕçе упполномоҫҫăннăйсем çинҫе тăваççĕ. Çакăн пек майсем ĕçе тĕрĕс орканисатсилеме вуçех май памаççĕ, активсене ӳстерессине ҫăрмантараççĕ, вырăнти рапотнĕксен хаваслăхне çухатаççĕ, ĕçре опеслиҫкă туса хăвараççĕ. Çакăн пек йĕркене татăклăнах пĕтермелле.

Колхос активне орканисатсилемелле, уйрăм хуçалăхлă активсене ĕçе хутшăнтармалла, парттипе комсомол йаҫейккисен, профсойуссен, хĕрарăм телекатсен коппературатси опҫăлăхĕн ĕçлеме пултарассине хăпартмалла, вĕсем урлă хуçалăхпа политтĕк кампанисене, йалхуçалăха сотсиалисăмла урăхлатса çĕнетессине пурнăçа кĕртмелле.

Пирĕн партти орканисатсисем йалхуçалăх йенне çаврăнманни çинҫен пирĕн партти орканисатсисем йалхуçалăха хăпартассишĕн поҫшевикла кĕрешĕве вăйлатманни калать. Пур пек машшинсемпе усă курма пĕлмеççĕ. МТ стантсисем ҫылай çĕрте тырăшăн кĕрешес, акротехнĕккăшăн, тырпула пĕр тăккаламасăр вăхăтра пуçтарса кĕрессишĕн, колхос йухăмне вăйлатассишĕн, тата колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетессишĕн кĕрешес ĕçре йертсе пыракансем пулса тăмаççĕ-ха. Ҫас-ҫасах МТ стантсисен тырпула уйхиртен пуçтарса кĕртес хăвăртлăхсем крайри вăтам хăвăртлăхсенҫен йулса пыраççĕ. Çакă вăл—районти тата МТ стантсисен вырăнти орканисатсисен ĕçпе конкретлă йертсе пыни çуккипе пулакан ĕç.

Тăккаланҫăкпа кĕрешнĕ ĕçĕн ыйтăвĕсене илĕпĕр. Ҫылай орканисатсисем тăккаланҫăкпа кĕрешессине ансăрăн ăнланаççĕ, ку ĕçе пĕрҫĕ тытакан йешҫĕксем тунипе çеç иртсе кайасшăн. Пирĕн партти тырпул тăккаланҫăкĕпе кĕрешессине йалхуçалăха хăпартассипе,

тырпул тухăçне ӳстернипе, колхоссен, колхоçнĕксен тупăшĕсене ӳстернипе çыхăнтарса тума хушать. Çавăнпа та тăкаксемпе кĕрешессине акротехнĕккăна пурнăçа кĕртессипе таҫҫăн çыхăнтармалла. Епĕр тырпула уйхиртен пуçтарса кĕртес кампанире тырра тăккалассипе кĕрешес ĕçре пысăк ĕç туса вăйлатрăмăр. Ку йалхуçалăх тырпула хăпартас тĕлĕшпе тунă ĕçсен пĕр пайĕ çеç. Ку ĕçре те пирĕн халĕ çитĕнӳсем пысăках мар. Йалхуçалăха хăпартассишĕн кĕрешессине пирĕн сарлака фронтпа вăйлатмалла. Пирĕн çумкурăкпа кĕрешес ĕç çине хытă çаврăнса пăхмалла. Çумкурăк çине талкăшпе пыракан фронтпа тапăнмалла. Çумкурăк çумлассипе акакан çĕр çинҫе çеç ĕçлемелле мар. Çумкурăксене пур уйсенҫе те, çĕртме пуссинҫе те пĕтермелле. Çумкурăксем пур çĕрте те, акнă уйсенҫе те, çĕртме уйĕнҫе те, улăхра та нӳре сăхнине, тырра йурăхлă ӳсентăрансен апат-çимĕçĕ сене пĕтернине, çапла вара вĕсем тырра ӳсме кирлĕ çимĕç паманнине манмалла мар, Çумкурăксене хирĕç вăйлă кĕрешӳ пуçарса йамалла. Октапретсенҫен пуçласа стариксене çитиҫҫен уйа тухса çумкурăксене пĕтермелле. Клас тăшманĕ çумкурăксемпе кĕрешессине пур майсемпе те ҫăрмантарать.

Ҫăваш респуплĕкĕнҫе çумкурăксене нихăçан та пĕтерес çук, утмăлтурата пĕтерме йурамасть, унсăр тырă тытăнса тăмасть, ӳкет т. ы. те текен теори пур. Çакăн пек калаçусене отпор памалла. Пĕрик çул хушшинҫе пирĕн çумкурăксене йăлтах пĕтермелле, çумкурăк тесе калаçассине пĕтермелле, вăл словар çинҫе çеç йултăр. Колхоссемпе совхоссенҫе çумкурăксемпе кĕрешмесĕр акротехнĕккăна талкăшпех пурнăçа кĕртмесĕр, епĕр йалхуçалăха хăпартаймастпăр.

Малалла колхоссене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетесси çинҫен. Ку тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинҫен Штанăв йулташăн токлаҫĕнҫе каланисем тĕрĕс. Колхос сене орканисатсипе хуçалăх йенҫен тĕреклетессинҫе тĕп ыйту—колхос ĕçĕн тухăçлăхне хăпартасси пулать. Ĕç тухăçлăхне хăпартасси, йалан ĕçлекен происвотсвăллă прикатăсен ĕçĕсене çирĕплетесси, пĕртанлăхпта,опеслиҫкăпа, ĕçкунĕсене салатса пĕтернипе кĕрешесси парт-

тин пур органисатсисен те пётём вăйа хурса кĕрешес сатаҫĕ пулмалла. Халĕ ҫакăн пек ҫитменлĕхсемпе ĕҫе пăснисемпе кĕрешессине пит те ҫителĕксĕр туса пыраççĕ. Ҫакăн пекех тата районтипе вырăнти органисатсисем колхоссемпе колхоçнĕксен тупăшĕсене ӳстерес тĕлĕшпе наҫар ĕҫлеççĕ. Колхоссенҫе пĕрлештернĕ тĕп хуçалăхсемсĕр пуçне колхоçнĕк хуçалăхне наҫар сарса пыраççĕ. Колхоссенҫе колхоçнĕксен хуçалăхсене вăйлатма темĕн пек лайăх майсем (хурт-хăмăр, кролĕк, пулă, ҫăх-ҫĕп ĕрҫетекен хуçалăхсем) пур. Ҫакăн пек хуçалăхсене сарас ĕçе вырăнти органисатсисем ҫирĕппĕнех тытăнман. Колхосăн тĕп коллективлă хуçалăхĕсĕр пуçне колхоçнĕкĕн кил вырăнĕнҫи хуçалăхĕ мĕнле вăйланса пырат, тесе ыйту парсан, районти, тата вырăнти рапотнĕксем те конкретлă нимĕнле ответ та памаççĕ, малалла мĕн тумалли ҫинҫен те шарламаççĕ. Ҫакă вăл—партти колхоçнĕксен хуçалăхĕсем, тата кил вырăнсенҫи хуçалăхĕсем ҫинҫен йышăннă решшени пурнăҫа кĕмесĕр йулни ҫинҫен калат. Ҫакăн пек хуçалăхсене вăйлатма пур пек майсемпе усă курмаççĕ. Ҫăваш респуплĕкĕнҫи Кошевĕнĕри колхоса илĕпĕр. Ку колхос ҫинҫен Штанăв йулташ каларĕ. Кошевĕнĕри колхосра хурт-хăмăр пур, виçĕ ҫулпа авăракан шыв арманĕ пур, колхоçнĕксем ку армана кăмпинат теççĕ, хăма ҫуракан, ҫăм тапакан претприйаттисем, тата халĕ туса пĕтерекен крахмал савăҫĕ пур. Ҫак претприйаттисем пурте шывпа ĕçлеççĕ.

Анҫах тепĕр ҫухне колхоссем пысăк строиттĕлствăпа ҫыхăнса кайаççĕ, укçа-тенкĕ нумай персе ҫикеççĕ, ҫасҫасах кун ҫинҫен колхоçнĕксенҫен те ыйтаççĕ. Ҫакăн пирки вара колхосăн тупăшĕ сахалланат, колхоçнĕксем килĕшми пулаççĕ.

Йалхуçалăх претприйаттисем колхоçнĕксен хуçалахĕсене, колхоссемпе колхоçнĕксен тупăшĕсене ӳстермелле, ҫапла тунипе вара колхоссене тĕреклетмелле, ҫуханпа вăтамсене колхоса ҫĕнĕрен нумайăн кĕмелли майсем туса памалла.

Пĕрик сăмах колхос катăрĕсене хатĕрлесси ҫинҫен. Пирĕн колхос катăрĕпе колхос активне хатĕрлес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле. Пирĕн катăрсем хатĕрлес ĕҫри

кӑстаршӡинӑран план тӑрӑх хатӗрлесси ҫине куҫмалла. Прикатирсем, уйхир ӗҫне йертсе пыракансем, ӗҫе орканисатсилекен, шута илекенсем, колхос претҫетаттӗлӗсем ваӡӡи йалан ӗҫлекен курссем орканисатсилемелле. Кунта план тӑрӑх ӗҫлемесен нимӗн те тухмасҭ. Епӗр Ӡӑващ респуплӗкӗнӡе колхос прикатирӗсем ваӡӡи 6 уйӑхлӑх курс уҫма йышӑнтӑмӑр. Халӗ ӗҫ орканисаттӑрӗсем ҫинӡен ыйту уйрӑмах хыттӑн тухса тӑмалла.

Колхоссенӡе ӗҫе орканисатсилесси мӗн ӡул малалла кайнӑ, ҫавӑн ӡул йӑвӑрланса пыраҭ. Йалан ӗҫлекен происвотствӑллӑ прикатӑ ӗҫе квалификатсиллӗ лартма хушаҭ. Прикатирсем ку ӗҫе пӗӡӡен туса ӗлкӗреймеҫҫӗ Кунсӑр пуҫне тата колхоссенӡе ҫак ӗҫе орканисатсиллӗ ҫавӑрса илекен, ӗҫсене пӗрлештерсе лайӑх оппӑтсене урӑх прикатӑсене куҫаракан ҫынсем ҫук.

Колхос правлени претҫетаттӗлӗ пӗӡӡен ӗҫ тума пултараймасҭ. Ҫавӑнпа та колхосра ӗҫе пӗлсе орканисатсилекен пӗр ҫын кирлӗ. Ҫак орканисаттӑрӑн ӗҫе орканисатсилес тӗлӗшпе квалификатсиллӗ ҫын пулмалла. Мӗн ӡул малалла кайнӑҫемӗн, унӑн колхосри вырӑнӗ ҫавӑн ӡул пысӑкланса пыраҭ. Ҫакӑн пекех уй ӗҫне тӑвакансен квалификатсине те татӑклӑнах хӑпартмалла. Колхос активне хатӗрлес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса иртермелле. 1932-ш ҫулхи оппӑт тӑрӑх ӗҫе орканисатсилессине ҫӳлӗ пусӑма хӑпартмалла; ҫапла тунине вара 1933-мӗш ҫулта йалхуҫалӑха хӑпартассине колхоссене орканисатсипе хуҫалӑх йенӡен тӗреклетес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене вӑйлӑн кӗртмелле тӑвас пулаҭ.

Йулашкинӡен епӗ орканисатсиллӗ ыйтусем ҫинӡе ӡарӑнса тӑрасшӑн. Ӗҫе конкретлӑ йертсе пымалла тӑвас шутпа епӗр партти аппаратне, профсойус оркӑнӗсене, промышлӗннӑҫ, ӡукунҫулпа шыв ҫулӗ транспӑрӡӗн тытӑмне, т. ы. те урӑхлатса ҫӗнетрӗмӗр.

Йалхуҫалӑха сотсиалисӑмла ҫӗнетессишӗн ӗҫлеме тивӗҫлӗ оркӑнсем ӗлӗкхи пекех йулаҫҫӗ.

Епӗр йалхуҫалӑха конкретлӑ йертсе пырас тетпӗр пулсан, пирӗн йалхуҫалӑха йертсе пыракан оркӑнсене те урӑхлатса ҫӗнетмелле.

Епр алхуçалха ҙăн-ҙăнах конкре тетпĕр пулсан, çĕрĕç оркăнĕсене те çĕнетмелле; çакăнпа вара йалхуçалăха татăклăнах хăпартмалла, колхоссене орканисатсипе хуçалăх, политтĕк йенҙен тĕреклетмелле, колхоссенҙе тупăшсене хăпартмалла, çакăн тăрăх колхоссене çĕнĕрен нумайăн кĕртессине орканисатсилемелле, талкăшпе колхоса куçнă никĕс çинҙе кулаксен класне пĕтермелле.

---

# ЙАЛХУÇАЛĂХА ХĂПАРТАССИПЕ КОЛХОССЕНЕ ТĔРЕКЛЕТЕССИ ÇИНЂЕН

## (Штанăв йулташ токлађĕ тăрăх йышăннă ресолјутси).

Совет сойусĕнђи çĕнтерӳллĕ сотсиалисăм строиттĕлстви, ПСК(п) партти Тĕпкомĕ полјшевикла йертсе пынипе пĕрремĕш пилĕкçуллăх плана ăнăçлăн пурнăçласа пыни, пĕтĕм халăх хуçалăхне реконструксилесе çитерме хамăр çĕршывра тĕреклĕ никĕс—сотсилисăмла машшинлă шултра интустри никĕсĕ туни йалхуçалăхĕнђе колхоссемпе совхоссене пĕтĕмпех мала тухма май пађĕ. Пролеттари патшалăхĕ колхос хуçалăхне васкавлă хăвăртлăхсемпе ђи çĕнĕ шултра машшинсемпе вăйлатаť.

„ССРС сотсиалисăм çулĕ çинђе çирĕппĕн ураланса тăђĕ, Совет сойусĕнђе сотсиалисăм татăклăнах çĕнтерђĕ ĕнтĕ тесе шутлама йураť“ (тырпул пуçтарасси çинђен Тĕпком йышăннинђен).

Çак çĕнтерӳсене рапођђи класпа ĕçхресђенĕсен пысăк массисен револјутсиллĕ хастарлăхĕ калама çук вăйлăн ӳссе пынипе, кăпиталисла елементсем çине пур фронтсем тăрăх та аслă наступлени туса пыракан парттин ленинла политтĕкне çирĕппĕн тытса пынипе, клас тăшманĕн акĕнђĕсене — халјхи тапхăрта тĕп хăрушлăх пулакан сылтăмпа „сулахай“ оппортунисăма çĕмĕрсе пынипе тунă.

Ђулхула крайĕнђи йалхуçалăхĕ çак çулсенђе çӳллĕрех сыпăка хăпарђĕ. 1928-мĕш çултан 1932-мĕш çула çитиђђен акмалли çĕр лаптăкĕ 20 проц. пысăкланђĕ. Технĕкла кулјттурсем, çĕрулми, тата курăксем акнă, çĕр лаптăкĕ ђылай ӳсрĕ. Крайри йалхуçалăхĕ технĕккă тĕлĕшпе те вăйланђĕ. 41 МТС тунă, вĕсенђе 1.127 трактăр крайри йалхуçалăхĕнђе акмалли тата тырпул пуçтармал-

ли шултра машшинсем ђылай йышлăланђĕç, акротехнĕк ĕçĕсемпе усă курасси вăйлăн сарăлђĕ (кĕрхи çĕртме, ирхи ака, вăрлăхсене суртлани, суртлă вăрлăхпа акни тата ыт. те).

1932-мĕш çулхи çуракинђе выђăх апађĕ тумалли куђттурсем тата çĕрулми акнă çĕр лаптăкĕ ђылай пысăкланђĕ. Çапах та, пленăм—партти орканисатсин тĕп сатађне — Ђулхула крайне потрепиттĕллĕ крайран тăвăмлă (таварлă) край тăвассине — пурнăçлас çулçинђе пĕрремĕш утăмсем анђах тунă тесе шутлаŤ. Крайри йалхуçалăхне хăпартас ĕçре хисеп йенђен çĕнтерӳсем тунă вăхăтрах, партти кăларса тăратнă тĕп сатађа — пахалăхшăн кĕрешессине, тырпулшăн, сĕт-турăхшăн, тата выђăх-ђĕрлĕх протуктăлăхне хăпартасси шĕн кĕрешес сатађа ђылайах пурнăçламан. Крайри йалхуçалăхĕ çаплах кайа йулса пыраŤ.

Крайри парторканисатси пĕтĕм йал массине, пĕтĕм айалти оркăнсене çак пысăк сатађ йеннелле çавăрма пултарайман-ха. Крайра выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетесси тата технĕкла куђттурсем йалхуçалăхĕн уйрăмăнах кайа йулнă уђаски пулаççĕ, çăмăл акротехнĕк ĕçĕсене те питĕ нађар пурнăçлаççĕ. Йĕгĕн пек куђттурсен тухăçлăхĕпе пахалăхĕ, çакăнпа пĕрле вĕсен таварлăхĕ те, питĕ айалти вырăнта тăраççĕ. Йалхуçалăхĕ, тата уйрăмăнах — выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетессипе йĕтĕн акса тăвасси пек пысăк вырăн йышăнса тăракан пайĕсем кайа йулни партти орканисатсин ĕçĕнђе питĕ пысăк çитменлĕх пулса тăраŤ. Орканисатсин ђылай пысăк пайĕ (ЂАССР, Верхошишемйе, 1-мĕш Похоротск, Çеркађ, Пођђинкки, Луккойанăв, Коротетс, Пор тата ыт. те) çураки тата иртнĕ çулхи тырпул пуçтарса кĕрессипе тырпул хатĕрлев кампанисен сатађĕсене ăнăçлăн пурнăçланă хушăрах, хăшпĕр орканисатсисем йалхуçалăхне хăпартас сатађ йеннелле çирĕппĕн çавăрăнман, çураки тата тырпул пуçтарса кĕрессипе тырпул хатĕрлевĕн планĕсене пурнăçламан (УАО, Пишанккă, Уни, II-мĕш Похоротск, Малмыш, Йаранск, Спаскав, А.-Полтино, Т.-Стан тата ыт. те).

Çакă—промышлĕннăç ӳсĕмĕ йалхуçалăх ӳсĕмĕнђен уйрăм пулса пыма пултарайманнине, халăх хуçалăхне

уйрăмăнах—хаљхи вăхăтра, классăр сотсиалисăм опшђĕстви тумалли пилĕкçуллăха кĕрес умĕн,—вăл пилĕкçуллăх хушшинђе пĕрремĕш пилĕкçуллăх вĕçĕнђипе танлаштарсан ĕçхалăхне куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç 2—3 хут ытларах памалла—сотсиалисăмла интустри ваљљи ђĕр таварпа апат-çимĕç никĕсĕ хатĕрлекен сотсиалисăмла йалхуçалăхне кулленех хăпартса пымасăр малашне хăпартма май килменнине крайри хăш-пĕр орканисатсисем шута илменнипе пулнă.

Çавăнпа та, партти орканисатсин—колхоссемпе совхоссен ӳсĕмĕ çине, йалхуçалăхĕ технĕккă тĕлĕшĕнђен вăйланни, йалти ĕçхалăх массисен ĕçхавaслăхĕ ӳсни, тата вĕсем партти çине шанса тăни çине тайăнса тĕшĕллĕ, тата уйрăмăнах—технĕкла куљттурсен (йĕтĕн, кантăр) тухăçлăхне хăпартнипе, тăкаксемпе кĕрешнипе сĕт паракан выљăхсен тухăçлăхне хăпартассишĕн, выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ыйтăва татассишĕн, совхоспа колхос происвотствин пахалăхне ăна малашне машшинлатнипе хăпартассишĕн, ĕç тухăçлăхĕпе таварлăхне хăпартассишĕн вăйлăн кĕрещнипе йалхуçалăхне малашне хăпартас сатађа пĕтĕм пысăккăшпе лартас пулаť.

Йалхуçалăхне васкавлăн хăпартмалли пĕртен пĕр çул—колхоссене орканисатсилĕхпе хуçалăх ĕçĕсем йенђен тĕреклетесси, тата вĕсене хăйсен хуçалăхне лайăхрах йертсе пыртарасси пулаť. Колхоссем, крайĕпе шутласан, ђухăнпа вăтам хуçалăхсене авкустăн 20-мĕшне 41 прођăн таран пĕтĕçтерсе тăраççĕ.

Йалхуçалăхĕн пур çитĕнĕвĕсенђе те колхоссем йертсе пыракан вырăна йышăнса тăђĕç. Вĕсем ĕçпе происвотствă çине сотсиалисăмла пăхнин тĕслĕхĕсене кăтартрĕç.

Колхоссем акмалли çĕр лаптăкĕнђен çуррине хăйсен аллине илђĕç, технĕкла куљттурсемпе выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕçре пысăк çĕнтерӳсем турĕç. Ĕçе орканисатсилесси йенђен çак иртнĕ çулта крайри колхоссем çӳллĕрех сыпăка хăпарђĕç.

Çапах та, колхос строиттĕлствипе ăна йертсе пырасси нумай орканисатсисем йенђен колхоспа çĕрĕç оркăнĕсем йенђен çителĕклĕ мар тесе шутламалла.

Колхос строиттĕлствинђе тĕп формă пулса тăракан-

йалхуçалӑх ертелне çирӗплетес тӗлӗшпе районсенҫен нумайӗшӗнҫе çителӗклӗ ӗçлеменни, колхос строиттӗлствине йертсе пырасси çителӗксӗрри, колхоссене орканисатсипе хуçалӑх ӗçӗсем йенҫен тӗреклетессине, сотсиалисӑмла ӑмӑртупа утарнӗҫӗствӑна, колхоçнӗксемпе колхоçнӗтсӑсем хушшинҫе политтӗкпа куҫттур ӗçне вӑйлатассине хакламанни, колхоссенҫе клас кӗрешӗвӗн еленҫӗсем палӑрнине манни, рваҫла тата опшҫӗствӑна хирӗçле шухӑшсене сирӗп отпор паманни—колхос строиттӗствине йертсе пырас ӗçре ӗç хӑй тӗллӗн пулса пырасса шанакан сылтӑм оппортунисла елементсем пуррине пӗлтереççӗ.

Тепӗр йенҫен, колхоçнӗксене хӑйсен ирӗкӗпе, хӑйсем пуçарса йанипе ӗçлеме ирӗк парас вырӑнне, атминистратсилле приккаспа, комантӑпа ӗçлеттерни, колхос строиттӗлствинҫи „сулахайла“ пӗртанлӑхпа хуçасӑрлӑх месленҫӗсем, вак-тӗвек выҫӑх-ҫӗрлӗхпе çурт-йӗрсене ирӗксӗрлесе пӗрлештерни, ӗçре опшҫӑствӑпа колхоçнӗкӑн хӑйӗн уйрӑм интересӗсене çыхӑнтарма пӗлменни—питӗ пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑрать. Партти çулйӗрне колхос строиттӗлствинҫе çакнашал пӑсса пӗтерни вӑл—„Ертелте çӗнӗ опҫӑллӑ тистсиплинӑ тӑвасси, хресҫенсене сотсиалисӑм тума вӗрентесси пӗтместь, вӑл унта пуçланать çеç. Колхоссенҫе хреçҫенсем хӑйсен харпӑрхӑйлӑ шухӑшӗсене, уйрӑм харпӑрлӑхран йулнӑ вак харпӑрлӑхлӑ шухӑша, вак харпӑрлӑхлӑ хуçалӑха вӑйлатассишӗн хыпса çунассине колхоссене шултра машшинлӑ хуçалӑхпа никӗслес тӗлӗшпе ҫылай вӑхӑтҫен çине тӑрсах ӗçленӗ майӗпе, колхоçнӗксем хушшинҫен çирӗп катӑрсем хатӗрлессишӗн çине тӑрсах ӗçлессипе, тата пӗтӗм колхос массисен куҫттур ӳсӗмне хӑпартнипе çеç пӗтерме пултараççӗ“ тенине хак паманнипе çыхӑнса тӑрать.

Çакӑ сылтӑмпа „сулахайла“ пӑсӑклӑхсене ҫылай колхоссенҫе хуçасӑрлӑх пулнипе, уйрӑм хуçалӑхсем, ӑраснах—ҫухӑнсем хушшинҫе ӗçлессине хак паманнипе, револҫутсиллӗ саккунлӑха пӑснипе, кулаксемпе, тата ун йуррине йурлакансемпе наҫар кӗрӗшнипе пӗрле илсен—хуçалӑхпа политтӗк йенҫен ҫылай пысӑк сийен кӳҫӗç, хӑшпӗр районсенҫе колхосран тухассисем пулни

патне, колхоссене ишёрсе хăварасси патне илсе пынă (Полтино, Колокрив, Малмыш, Урен, Мураш, Т.-Стан, Ветлукă, Арпаш, Упи, Путурлино, Утмурт оплăçĕнђи ђылай йероссем).

Кусемпе пĕрлех, пленăм çакна палăртаť: колхос строиттĕлствине пољшевикла йертсе пыма пĕлнĕђылай районсем (Викаљски, Номенски, Санђурски, Кăрмăш, Мурăм, Порă, Сунски, Совет, т.ыт.районсем) колхоссене ўстерсе пыма пултарнă.

Пленăм колхоссене орканисатсипе хуçалăх ĕçĕсем йенђен тĕреклетесси хăйсен ĕçĕсене вăйлатма тăрăшакан кулаксене хирĕç кĕрешĕве вăйлатасси уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсем хушшинђи итейăпа политтĕкла ĕçе татăклăн лайăхлатасси, вĕсемпе тĕрĕс çыхăну тытасси—колективисаттсин массăллă йухăмне çĕнĕрен вăйлатса йама кирлĕ татăклă сыпăкĕсем пулса тăнине палăртаť. Пленăм пĕтĕм партти орканисатсисенђе колхос строиттĕлствинђе тунă йăнăшсемпе пăрăнђăксене халех йусаса çитерме хушаť.

Крайри колхоссенђи йалхуçалăхне хăвăртрах хăпартса пыма пирвайхи ђеретпех хуçалăхлă пуçарупа колхоссен пуçарăвĕсене вăйлатса йамалла, ĕç тистсиплинĕпе ĕç тухăçлăхне хăпартмалла.

Çак сатађсене татса парасси—колхосра тĕп сыпăк пулса тăракан йаланхи происвотствăллă прикатăсене кашни уйрăм ĕç тăрăх туса çирĕплетсе пынипе, çтелшђĕнăна çирĕплетсе пынипе, малта пыракан колхоçнĕксенђен прикатирсен çирĕп катăрĕсем тунипе, йалхуçалăх происвотствинђе хуçасăрлăхпа уравнилăвккăна пĕтерсе пынипе (вĕсем уйрăмах—выђăх-ђĕрлĕх ĕçĕпе йĕтĕн тăвас ĕçре питрех сарăлнă) çыхăнса тăраť. Çак сатађсене татса памах—хуçалăх çумĕнђе туса илнĕ тупăшсене ĕçĕн хисепĕпе пахалăхĕ тăрăх валеçмелле, тĕрĕс уђђот тумалла, колхоçнĕксемпе вăхăтра тата йĕркеллĕ рашђут тытса пымалла.

Пленăм уйрăмăнах, колхос строиттĕлствин малашнехи ăнăçлăхĕнђе уйри тырпула пуçтарса кĕртсе пĕтернĕ май, кĕракине тытăннипе тырпул хатĕрлевĕ, тупăша пĕтĕмĕшпех валеçсе пĕтерес ĕçсем тăнă май

йалхуçалăхĕн тĕп кампанийĕсене ăнăçлăн иртересси татăклă вырăн йышăнса тăнине палăртаť. Йалхуçалăхĕнђи хатĕрлеве, пуринђен ытла тырпул хатĕрлевне хăвăртăн, ăнăçлăн иртерни, уйри тырпула, пуринђен ытла йĕтĕне хăвăртрах пуçтарса кĕртсе пĕтерни, тырпул тăкакĕпе кĕрешни, кĕраки планне, кĕрхи çĕртмене 100 прођăнĕпе пурнăçлани, колхоçнĕксем пысăк тухăç илме пултарнă таран тупăша тĕрĕс валеçнийĕ колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсем хушшинђи ĕçе вăйлатса пынипе колхос суту-илӳне сарса пыни, кулаксемпе çпеккуђантсемпе кĕрешессине татах вăйлатса пыни—1932-мĕш çулхи кĕркуннех колхоссен çĕнĕ йухăмне тапратса йама пысăк май памалла.

Çапах та пленăм, тырпул хатĕрлевĕ çинђен, тыррăн тата укçан аванс парасси çинђен, лайăх ĕçлекен прикатăсемпе прикатирсен ĕçкунĕсен хаклăхне ӳстерессипе çинђен, колхоссен катăрĕсем çинђен парттипе правиттĕлствă йышăннă решшенисене ђылай районсенђе пăсса пынине палăртаť. Çакă пăсса пынисем вĕсем тупăша йатак тăрăх валеçесси халĕ те тăсăлса пынинђен, аванссене кулакла валеçме пăхнинђен,уравнилăвккă халĕ те палăрса пынинђен, тата тырпул хатĕрлевĕн планне механиђђĕскӣ кăна туса пынинђен, колхоçнĕксене татăклăнах рашђут парса пыманнинђен колхоçнĕксене укçан аванс парассине тытса тăнинђен, колхос фонђĕсене рвађла салатса пынинђен, ĕçе йĕркесĕр йапăх шута илсе пынинђен курăнаççĕ. Крайком—партти орканисатсинђен, çĕрĕçне колхос орканисатсинђен çакăнта кăтартнă йăнăшсемпе пăсса пынисене пĕтерме халех хушаť.

Крайком—партти орканисатсисем умне, уйри тырпула пуçтарса кĕрессипе авăн çапас, тата тупăша валеçес ĕçсене тунă ђухне çакăн пек туса пырас сатађа кăларса тăратаť: колхоссем хăйсен патшалăх планне йĕркеллĕ тултарса пынă, вăрлăх, страховккă фонђĕсене вăхăтра туса пынă май колхоçнĕксемпе рашђут тунă ђухне колхоçнĕксене ĕçкунĕсемшĕн пĕтĕм тупăшран 50—60 прођăнне валеççе памалла. Çак вăл колхоссенђи кăпитађнăй строиттĕлствăри тĕрлĕрен ытлашши ĕçсене, тирпейсĕрлĕхе, атминистратсипе хуçалăх расхуђĕсене татăк-

лăн сахалатассипе, тата колхос пурлăхне кулаксем салатса, вăрласа пĕтерессинҫен хăраса тăрасси пирки, сисмен хушăра вăрласа колхос хуçалăхне салатса йарас тесе хăйсен ĕçне вăйлатса пыракансем пирки кăларнă текретпа çыхăнса тăрать. Çак шутпах Крайком партти орканисатсисене, çӳлерех тăракан оркăнсем йышăннипе колхоссенҫе тĕрлĕрен тĕслĕ, саккунсăр фонтсемпе тытса йулма пăхнине халех пĕтерме хушать.

Пленăм уйрăмăнах партти орканисатсисем çĕрĕç, колхос оркăнĕсем выҫăх-ҫĕрлĕхе ĕрҫетессине хăпартса пырас ыйтусем тавра татăклăнах çавăрăнса тăма кирлине палăртать. Выҫăх-ҫĕрлĕхе ĕрҫетесси кайа йулса пынин тĕп сăлтавĕсем çаксем пулаççĕ: выҫăх-ҫĕрлĕхе ĕрҫетесси çине пăҫах та çителĕксĕр çавăрăнса пăхни, выҫăх-ҫĕрлĕх пухас ĕçре, тата пĕрлештерес ĕçре пăрăнҫăксем тунипе пăсса пĕтерни, колхос фермисенҫи ĕçе çителĕксĕр орканисатсилени, лашана çителĕклĕ пăхасси çукки, тата выҫăх-ҫĕрлĕхе салатса пĕтерессишĕн кулак саракан акитатсине çителĕклĕ отпор паманнипе уйрăм хуçалăхсенҫе выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетессине хăпартса пырассине хак паманни.

Партти орканисатсисен выҫăх-ҫĕрлĕхе ĕрҫетес йенĕпе тухса тăракан сатаҫĕ—колхоссенҫе çирĕп апат-çимĕç никĕсĕ (хытă апатсем, çилос, сĕткенлĕ апат-çимĕçсем) тăвасси, вĕсем ҫăннипех МТФ-па СТФ-сене, тата пĕрлештермен выҫăх-ҫĕрлĕхсем ваҫҫи çителĕклĕ туса çитермелле. Пленăм уйрăм хуçалăхлă ҫухăнпа вăтам хресҫен хуçалăхĕсенҫе выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетессине пулăшса пыма кирлине татăклăнах вăйлатма хушать. Партти орканисатсисен пур майпа та уйрăм хуçалăхсем хăйсен выҫăхҫĕрлĕх кĕтĕвĕсене пысăклатма, тухăçлăха лайăхлатма, сĕт нумайрах суса илессине лайăхлатма, апат-çимĕç çителĕклĕ тăвассипе, выҫăхсене тĕрĕс пăхса ĕрҫетме тăрăшнине пур майсемпе те пулăшса пымалла.

Партти орканисатсин йĕтĕн-кантăр тăвас ĕçе хăпартассипе тăракан хĕрӳллĕ сатаҫĕ—йĕтĕн тухăçлăхне ӳстерессипе йĕтĕн тăвас ĕçĕн пахалăхне лайăхлатасси пулать. Çак тĕлĕшпе йĕтĕн тăвакан колхоссемпе уйрăм хуçалăхсене çăмăллăхсем парасси çинҫен парттипе

правиттĕлствă йышăннă решшенисене пĕтĕмĕшпех пурнăҫа кĕртсе ҫитермелле, лайăх ҫĕрсене йĕтĕн акма уйăрса парас, вăрлăха тасатса хурса усрас, йĕтĕн акмалли ҫĕрсене лайăхрах ĕҫлес, тата акрономи кăтартăвĕсене пурнăҫа кĕртсе пырас ĕҫсене татăклăнах лайăхлатса ҫитермелле.

Партти органисатсийĕ йĕтĕн тухăҫлăхĕпе сӳс пахалăхне 2—3-ҫул хушшинҙе ҙи пысăк тухăҫлă ҫулхипе танлаштарма тивĕҫлĕ.

Колхоссемпе уйрăм хуҫалăхлă ҙухăнпа вăтамсен хуҫалăхри пуҫарăвне хăпартас, тата куљттурăсене лайăх тĕлпе вырнаҫтарса тухас майпа, Крайком пленăмĕ йалхуҫалăхне планлас йĕркене тĕпренех улăштарса, районсене йалхуҫалăх тĕлĕшпе спетсиалисатсилес, тата уйрăм куљттурăсен акине тĕрĕс ылмаштарса парас ĕҫре палăракан йĕркесĕрлĕхе пĕтерме кирлĕ тесе шутлаŤ. Уйрăм куљттурăсем хушшинҙи ҫыхăну, МТФ-семпе СТФ-сене вырнаҫтарасси йĕркесĕр пулмалла мар, вăл ĕҫе колхосемпе пĕрле, районсене панă сатанисем тăрăх тумалла. Пĕрре йышăннă уй ҫаврăнăшне урăх кирек мĕн пулсаŤ та улăштармалла мар.

Ҫĕрĕҫпе совет оркăнĕсен йалхуҫалăхĕпе ака, тата ытти кампанисене, тата уйрăм хуҫалăхсен ĕҫпланне йĕркесĕр формалисла йертсе пырассишĕн мар, ҙăннипех йертсе пырассишĕн тăрăшмалла. Уйрăм х-не плана формалисла йамалла мар, ăна пурнăҫлама май килни йенҙен тĕрĕслесе тухмалла. Уйрăм хуҫалăхсене план тăрăх ĕҫлеттерсе пырасси, плана пурнăҫланине тĕрĕслесси колхоспа харпăрхăйлă ҙухăнпа вăтам хресҙен хуҫалăхĕн сатаҙĕсемпе, йалхуҫалăх происвотствине хăпартассипе ҫыхăнса тăмалла.

Ҫĕрĕҫ тĕлĕшĕнҙен ĕҫлекен хăшпĕр рапотнĕксем уйҫаврăнăшĕнҙе курăксем ытларах акса тăвассипе интереслене пĕрҙĕллĕ куљттурсене виҫерен ытла ҙакарса пыма тăрăшнине Крайком пленăмĕ йатлаŤ.

Пленăм Крайри ҫĕрĕҫ управленине уйрăм йалхуҫалăх ĕҫлĕ районсемпе уйулшăнăвĕсене ҫирĕплетес тĕлĕшри ĕҫсене хăвăртрах туса пĕтерме хушаŤ. Вара 1933-мĕш ҫулхи ҫуртыррисене ҫав ҫĕнĕ йĕркесем кăтартса пани

пек акса хăвармалла пултăр тет пленăм. Колхосенђе ĕçпе происвотствă планĕсене йаланах колхосри пĕтĕм ĕçсене тата хуçалăхăн тĕрлĕ пайĕсене тĕплĕн шута илсе тумалла.

Колхос строиттĕлствинђе атминистратсиллĕ йĕркесемпе ĕçлени парттин ленинла çулйĕрĕ патне нихăш йенђен пыраймасť. Колхоспа унăн катăрĕсем хăйсен хуçалăхшĕн пĕтĕмĕшпех хăйсем ответлă. „Колхоçнĕкăн колхос хуçи пулмалла. Колхоçнĕксемпе килĕшсе татăлмасăр колхос пурлăхĕнђен пĕр тенкĕ те урăх çĕре расхутлама йурамасť“ **(Кагановиђ)**.

Крайком партти орканисатсисене уйрăм хуçалăхпа пурăнакан ђухăнпа вăтам хресђенсене колхоса кĕртес тĕлĕшпе, тата уйрăм хуçалăхсемпе колхоссем пĕрпĕринпе лайăх çыхăнса пурăнассине çирĕплетсе пырас майпа хытăрах ĕçлеме кирли çинђен асăрхаттарать. Уйрăм хуçалăхсен хушшинђе ĕçлессине кăштах хак паманни те партти çулйĕрне пăсни колхос строиттĕлствин тăшманĕсене пулăшни пулать.

Пленăм—парттин пĕтĕм орканисатсисемпе Крайколхоссойуса çенťапĕрпе окťапĕр уйăхĕсем хушшинђе йалхуçалăх çулĕн хисепĕсене шута илес майпа колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхсен пуххисенђе колхоссен массăллă отђоđĕсене туса иртерме хушать. Пĕтĕм ĕç йĕркинђе массăллă ĕçсем (колхоçнĕксемпе уйрăм хресђенсен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсем, колхос активĕн уçă пухăвĕсем, пуçаруллă ушкăнсем ĕçлени т. ыт. те) туса колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă хресђенсен хушшинђи çыхăнăва çирĕплетмелле, уйрăм хуçалăхлă хресђенсем хушшинђе колхос строиттĕлствин çитĕнĕвĕсемпе паллаштарассине вăйлатмалла.

Пленăм ђухăнсем хушшинђе ĕçлессине (ђухăнсен, ђухăнсен ушкăнĕсен канашлăвĕсем, ђухăн хуçалăхсене пулăшасси т. ыт. те) тĕпренех лайăхлатма хушать. Ђухăнсем хушшинђи ĕçе куллен-кунах туса пырса, вĕсен пурнăçне çăмăллатма, хăйсене колхоса кĕртме тăрăшмалла.

Сотсиалисăмла йалхуçалăхĕн орканисаттăрĕсем вырăнĕнђе пулса МТС-сем ђылай пысăк çитĕнӳсем турĕç. МТС-сен ĕçĕнђи тĕп çитменлĕхсем çаксем—вĕсем хăйсен

ĕçне хакла лартни, МТС-сем ĕçре хăш-пĕр ђух колхоссенђен уйрăлсарăх тăни, колхоссен ĕçне колхос активĕсене йапăх хутшăнтарса пыни, трактăр паркĕ пур ђухне йусавлă тăрайманни, трактористене уй ĕçĕ вăхăтĕнђисĕр пуçне, хĕл тăршшĕнђе трактăрсем çумне çирĕплетейменни. Çак çитменлĕхсене çĕнме парторканисатсисемпе МТС-сен тимлĕн тытăнмалла.

Лашан туртăм вăйне хак паманни, ăна йĕркесĕр тыткалани çуракипе тырпулсене пуçтарса кĕрес камппанире хăшпĕр районсенђе ђылай пысăк çитменлĕхсем патнех илсе пыђĕ.

Тĕпком лашасен шутне ӳстерес пирки йышăннă постановленийе пурнăçа кĕртессишĕн, лашасене тирпейсĕр пăххасине пĕтерессишĕн, ђĕрĕ туртăм вăйĕпе, машшинпа ĕçлессине ђипер йĕркелесе пырассишĕн çине тăрса кĕрешмелле. Сăмахран, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтсенђе вăрман хатĕрленĕ ђухне ђĕрĕ туртăм вăйне пухмалли планах йалсемпе колхоссен тĕп уйрăмлăхĕсене шута илсе тăвас пулаť. Кунта ђи малтан ђĕрĕ туртăм вăйĕ вăрман хатĕрлевĕнђе усă курнă вăхăтра йалхуçалăх ĕçĕсене тума та çителĕклĕ пулмалла—çакна лайăх йĕркелесе пыма пĕлес пулаť.

Парттипе колхос орканисатсисен колхоçнĕкăн, хăйне пулăшакан харпăрлă хуçалăхне хак паманнине татăклăнах пĕтерсе пымалла. Колхосăн пĕрлештернĕ хуçалăхне тĕреклетсе пынипе пĕрлех, опђăллă интерессене хирĕç пыракан, рвађла шухăшсене татăклă сивлесе партти орканисатсисен Тĕпком хăйĕн 1932-мĕш çулта, мартăн 26-ђе йышăннă постановленире кăтартса панă пăрăнђăксене пĕтерсе пымалла. „Кашни колхоçнĕкăн хăйĕн ĕни, хăйĕн вак выљăх-ђĕрлĕхĕ, кайăк-кĕшĕкĕ пултăр“.

Ђылай вырăнсенђе пĕђĕк сатсене, кил вырăнĕсене пĕрлештересси йенĕпе тунă пăрăнђăксене тӳрлетменнисем пур. Çак „сулахайла“ пăрăнђăксем, тата колхоçнĕкăн хăйне пулăшмалли хуçалăхĕнђен хăрани—колхос йухăмĕн вăйĕ çине шанмасăр тăнинђен, хаљхи вăхăтра колхос строиттĕлствин тĕп вырăнĕнђе тăракан ертел урлă сиксе каçма хăтланнинђен килеççĕ. Хаљ ертеле çирĕплетсе

çитереймен-ха, çавăнпа та вăл колхос строиттĕлствинҫе темиçе çул хушши тĕп вырăн йышăнса тăмалла.

Крайком—партти орканисатсине, пысăк майсем пур ҫухнех, крайра йалхуçалăхĕн иккĕмĕш вырăнта тăракан пайĕсемпе колхоса пулăшакан претприйаттисем вăйсăр аталанса пыни çинҫен асăрхаттарат̆. Вĕсем пысăк тупăш пама пултараççĕ (сатсем, пахҫасем ĕрҫетни, кролĕксем, кайăк-кĕшĕксем усрани).

Пленăм пӳрова натси автономисенҫе йалхуçалăхне хăпартас тĕлĕшпе тума кирлĕ ĕçсем çинҫен сӳтсе-йавма хушат̆. Уйрăмăнах, выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес ĕçе, технĕк куҫттурисене акса тăвас, тырпул тупăшне хăпартас тĕлĕшри ĕçсем çине хытăрах çавăрăнса пăхма хушас. Çавсемпе пĕрлех тата катăрсем хатĕрлемелле, çав ĕçсене тума катăрсемпе, çĕрпе акрономи рапотнĕкĕсемпе çирĕплетес.

Крайком алăсталăхлă районсенҫи партти орканисатсисене—промкопператси çинҫен кăларнă текрета çителĕклĕ мар пурнăçласа пынине, тата çав районсенҫе йалхуçалăха йертсе пырассинҫе пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартат̆. Вăл çитменлĕхсем: алăсталăх промыслисемпе йалхуçалăх çыхăнса тăрассин тĕп форми пулса тăракан ҫылай промертелсенҫе йалхуçалăх йенĕпе анҫах ĕçлесе пыни, ертелсенҫе ĕç вăйне тĕрĕс тăратса тухманни; кун пек пулни—алăсталăх промыслине пĕтсе ларасси патне илсе пырат̆.

Йалхуçалăха хăпартас, колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнҫен тĕреклетес сатаҫсем—партти орканисатсисене, çĕрĕçпе колхос оркăнĕсене крайри орканисатсисенҫен пуçласа йалти орканисатсисене итиҫҫен йалхуçалăха йертсе пырассин пĕтĕм ĕçĕсене татăклăнах аванлатма хушаççĕ.

Крайком пленăмĕ промышлĕннăçлă районсенҫипе хуласенҫи орканисатсисене йалхуçалăх ыйтăвĕсем çине çавăрăнса пăхассине вăйлатма парттин йалти политтĕкĕн ыйтăвĕсем тăрăх паллăрах решенисене рапоҫҫисен массине ăнлантарма, рапоҫҫисен шеф ĕçне аванлатнă майĕпе шефа илнĕ колхоссемпе тата йалсемпе çыхăнса тăрассине çирĕплетме хушат̆.

Йалхуçалăха хăпартас тĕлĕшпе ĕçлессине йертсе пырассинђи тĕп çитменлĕх—татăклă марлăх, „вопшђĕм, пĕтĕмĕшпе илсен“ йертсе пыни, атминистратсиллĕ, кампаниллĕ меслет, тата тĕрлĕ тĕслĕ упполномођђăннăйсен йĕрки, тăрлавсăрлăх тата опеслиђкă анлăн сарăлни пулса тăрат; çав вара вырăнсенђи колхоспа совет активĕсене улăштарасси патне илсе пырат, тата катăрсем туса çитерес ĕçе ђăрмантарат. Тепĕр йенђен, парттин ђылай орканисатсисем кулаксемпе вĕсен акĕнђĕсене сылтăм сулăнђăксемпе „сулахай“ пăрăнђăксене хирĕç йаланах кĕрешсе пырас выранне сылтăм оппортунисла ĕçсемпе „сулахай“ пăрăнђăк, тата партти çулйĕрне пăсни патне кайса ларнă.

Йалхуçалăхри çĕнĕ сатађсем—колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетес, сынсен ăстăнне улăштарса çĕнетес, катăрсене, пуçарулăхпа пултаруллăх хастарлăхне ӳстерес, крайĕпе 60 прођăн уйрăм хуçалăхсем шутланса тăнипе унăн натсиллĕ уйрăмлăхсене шута илнипе кулаксемпе кĕрешес сатађсем—йалхуçалăха çӳлтен пуçласа айала çитеђђенех йертсе пырассин пĕтĕм ĕçне аванлатса пыма, йертсе пырассин пахалăхне хăпартма, ĕç çине тăрлавсăр, татăклă мар пăхас меслете, ĕçри тĕллевсĕрлĕхпе опеслиђкăна тĕпренех пĕтерме, ĕçĕн тĕп шухăшне çавăрса илме, оппортунисăмпа тата пӳрократлă пăснисемпе татăклăн кĕрешме ыйтаççĕ. Çакăн пек тума йалта çирĕп, çапăçури пултарулăхлă партти орканисатсине туни кирлĕ.

Йалта парттипе комсомол орканисатсисен ĕçĕнђи тĕп çитменлĕх—партти ăшĕнђи, массăллă, тата итейăпа политтĕк ĕçĕсем нађарри пулса тăрат.

Колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетессишĕн кĕрешесси, колхоçнĕксемпе колхоçнĕтсăсен массине çĕнĕлле вĕрентессишĕн çине тăрсах ĕçлесси, уйрăм хаçалăхлă ђухăнпа вăтам хресђен хуçалăхсене малалла коллективласа пырас сатађсем—парттин массăллă ĕçĕсене татăклăнах вăйлатма, тата массăсемпе пит те тађă çыхăнса тăма ыйтаççĕ.

Массăллă ĕçе, тата партти ăшĕнђи ĕçе сарса йама пĕлекен, колхос правленине улăштармасăр колхос пур-

иăçĕн пĕтĕм йенĕсене алла çавăрса илекен, колхос катăрĕсене туса çирĕплетме пĕлекен, колхоса хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетнипе коллективисатси йухăмне çĕнĕрен вăйлатма пултаракан, тата уйрăм хуçалăхсемпе тĕрĕс çыхăнса тăрассипе массăсемпе пит те тађă çыхăнса тăрассине тума пĕлекен партти орканисатси йала сотсиалисăмла улăштарса çĕнетес ĕçĕн ђăн-ђăн йертсе пыракан вăй пулса тăраť.

Комуниссемпе комсомолĕссенђен халĕ пит те пысăк сисĕмлĕхпе хастарлăх кирлĕ. Çӳлте тăракан орканисатсисен сатађĕ—йалти парттипе комсомол орканисатсисен политтĕкла пултарулăхне хăпартасси, вĕсене вĕрентсе пырасси пулаť.

Парттипе комсомол орканисатсисен пĕтĕм вăйĕсене йалхуçалăх происвотствин паллăрах уђаскисем çинђе тытăнтарса тăмалла. Комуниссемпе комсомолĕссем прикатăсенђе ђăннипе малта пыракан утарнĕксемпе происвотствăна орканисатсилекенсем, массăсен политтĕкла орканисаттăрĕсемпе йертсе пыраканĕсем пулса тăмалла.

Пленăм—йалхуçалăхлă районсенђи орканисатсисене пулăшма крайăн хуласенђен районсене йаланлăха ĕçлеме 500 комунис йама йышăнаť.

Крайком пӳровне—кăçалхи хĕлре крайри натсиллĕ автономисенђе, тата районсенђе курссем орканисатсиленĕ майĕпе катăрсем хатĕрлессине (колхос претçетаттĕлĕсем, шут ĕçне тăвакансем) сарлакан сарса пымалли прокрама тума хушас.

Йалхуçалăха хăпартассипе колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетес тĕлĕшпе кăтартнă пĕтĕм сатађсем ăслăлăхпа технĕк катăрĕсене хатĕрлес, вĕсемпе выранлă усă курассипе, вĕсем вађђи вĕсен происвотствăллă ĕçĕнђе лайăх условисем тăвассипе вĕсен квалификатсине ӳстерес ыйтусем çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма ыйтаççĕ.

Партти орканисатси ответлă тапхăра—тырпул хатĕрлевĕ, йĕтĕн хатĕрлевĕ, кĕраки, кĕрхи çĕртме тăвас, колхоссенђе тупăшсене валеçес тапхăра кĕђĕ. Лайăх вăрлăхсемпе акни, тарăн сухалани, кĕрхи çĕртмене ир тунипе тырра вырса илнĕ хыççăнах хăмăл çинђен çĕре

ӳрепе кӑпкалантарни, йӗтӗн акма лайӑхрах ҫӗр лаптӑкне хатӗрлени—крайра пысӑк тухӑҫлӑ кӗрхипе ҫурхи тырпулсем тума май параҫҫӗ. Тырпул хатӗрлевне ӑнӑҫлӑрах орканисатсилеме пултарнинђен, тырпулсене уйхиртен пухса кӗнинђен, кӗракипе кӗрхи ҫӗртмене туса иртернинђен, тупӑшсене уйӑрассине туса иртернинђен, малта пыракан колхоссемпе малта пыракан орканисатсисен оппӑђӗсемпе ҫитӗнӗвӗсене колхоссен пӗтӗм массине пама пултарнинђен, колхоссене йертсе пырассипе орканисатси йӗркинђи пӗтӗм ҫитменлӗхсене лайӑхрах пӗтерме пултарнинђен, колхоссемпе уйрӑм хуҫалӑхлӑ массӑсен итейӑпа политтӗкла вӗрентессине ҫӳле хӑпартма пултарнинђен, уйрӑм хуҫалӑхлӑ ӗҫхресђенӗсен йенӗпе партти ҫулйӗрне тӗрлӗрен пӑснисене пӗтерме пултарнинђен, тата револютсиллӗ саккунлӑха пурнӑҫа кӗртме пултарнинђен,—колхос строиттӗлствин ӗҫӗнђен ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвасси, потрепиттӗллӗ крайран тӑвӑмлӑ (таварлӑ) край тӑвас ҫул ҫинђе ӗҫе татса пыракан ҫитенӳсем тӑвасси килет.

---

## ПОТРЕПКОППЕРАТСИ ЕҪӖ, ТАТА КОЛХОС СУТУ-ИЛӲНЕ ВӐЙЛАТАССИ ҪИНЂЕН.

### (Крайпотрепсойуспа Крайснапӑн отђотлӑ токлађӗсем тӑрӑх йышӑннӑ ресоЉутси).

ПСК(п)П Крайком пленӑмӗ ҫакна палӑртаҭ: Крайкомӑн теккапӗрти пленӑмӗ пулса иртнӗрен вара потрепкоппратсипе патшалӑх суту-илӳ ӗҫӗнђе совет суту-илӗвне вӑйлатас, лавккасен шутне ӳстерес, йала таварсем ытларах тӑратас, савӑтсем, претприйаттисем, копператсисем ҫумӗнђе хӑйсен ҫимӗҫ саппасӗсем тӑвас, хуласем ҫумӗнђи хуҫалӑхсенђе ҫимӗҫсем акса тӑвассине ӳстерес, тата пӗрле апатланас ӗҫсенђе хӑш-пӗр ҫитӗнӳсем тунӑ пулсан та, вӗсем хӑйсен ӗҫӗсене совет суту-илӗвӗн условисене май ҫӗнетсе ҫитеймен, пуринђен ытла куӗҫ йалта нађар тӑраҭ.

Колхоссен суту-илӗвӗнђе малтанхи ҫитӗнӳсем тунине (ҫӗнӗ пасарсем уҫни, ђылай ҫӗрте пасарсене хресђенсем нумай тухни) палӑртнипе пӗрлех, Крайком пленӑмӗ крайра колхос суту-илӗвӗ нађар пыраҭ тесе шутлаҭ.

Крайком пленӑмӗ—Крайпотрепсойуспа Крайснапӑн ӗҫӗсем халӗ те паллах нађар пынине кӑтартаҭ, вӗсен ӗҫӗ рапођђисен, колхоҫнӗксен, тата уйрӑм хуҫалӑхлӑ ӗҫхресђенӗсен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсенђен кайа йулса пыраҭ, вӗсен ӗҫӗ пуринђен ытла ҫӗнӗрен таварсем тупас, таварсене потрепиттӗл патне ҫитерес, тавар ҫавӑрӑнӑҫне орканисатсилс тӗлӗшпе нађар пыраҭ.

Потрепкопператси ӗҫӗнђи ҫак пур ҫитменлӗхсем те ПСК(п)П Тӗпкомӗ йалти суту-илӳ оркӑнӗсене ҫирӗплетессипе йалти копперативсен хуҫалӑхне хӑйсем тытса пымалла тӑвасси ҫинђен йышӑннӑ решшенисене пурнӑҫа кӗртменнипе, коппeратси опђӑлӑхӗ копператсин кулленхи ӗҫӗнђе хулара та, пуринђен ытла йалта ҫите-

лёксĕр хутшăннипе пулнă; çав шутах тата халăх пурлăхне салатса пынисемпе çыхăнса тăракан уйрăм пăрănђăксене те пĕтермен, совет суту-илĕвне таварсене тӳррех пайласа пырас туртăм та пĕтмен.

Рапођђи копператсисене рапођђисен хупă копператсисем йеверлĕ çĕнетни копператсийе претприйаттисем патне çывхартнине палăртса, пленăм, рапођђисен ђылай хупă копператтивĕсем, пуринђен ытла Кулепак, Выкса, Автосавăт копператтивĕсем рапођђисен снапшенине хупă копператтивсен хăйсен çимĕçсем хатĕрлесси çинђен, колхос суту-илĕвĕ çинђен партти йышăннă решшенисем тăрăх лайăхлатас йенĕпе пур майсемпе те усă курман; çавăн пекех, потрепкопператсин хăйĕн хуçалăхĕсем тăвассипе те усă курман.

Пленăм массăна рапођђисен снапшенине лайăхлатас çĕрти татăклă ĕçсене пурнăçа кĕртме мопилисатсилес тĕлĕшпе профсойус орканисатсисен ĕçĕнђе пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартать.

Крайком пленăмĕ партти, совет, профсойус тата суту-илӳпе копператси оркăнĕсене совет суту-илӳне сарас, хулапа йалсенђи ĕçхалăхĕн снапшенине лайăхлатас тĕлĕшпе çак ĕçсене пурнăçа кĕртме пођшевикла тимлĕхпе туса пыма хушать.

### I. Тавар çаврăнăçĕпе тавара ырăнĕсене çитерес ĕçе орканисатсилесси.

1. Таварсене вырăна çитерес çĕрте илсе-парса тăракан орканисатсисем нумай пулни тавара вырăна хăвăрт çитерме ђарать, тата наклатной расхутсене ӳстерет. Пленăм—Крайком пӳровне курттăмăн суту-илӳ тăвас ĕçе йĕркелес, курттăмăн тавар паракан склатсене районсем патне çывхартас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçсем тума хушать; çакăн пек туни—йалти копператтивсем, рапођђи копператтивсем таварсене унтан тӳррех хăйсем суйласа илме пултарђăр.

2. Тавар çаврăнăçне орканисатсилес тĕлĕшпе пленăм суту-илӳпе копператси, партти, совет, профсойус оркăнĕсене кĕске вăхăтра çаксене пурнăçа кĕртме хушать:

а) копператсипе промышлĕннăç тавар склађĕсенђен

кирлĕ таварсене вырăнсенђи копперативсен (йалти копперативĕсем, рапођђисен хупă копперативсем, рапођђисен копперативĕсем) хăйсен суйласа илмелле. Вырăнти копперативсем таварсем курттăмăн парса тăракан орканисатсисене (промышлĕннăçпа копператсин пасисене) хăйсене мĕнле тавар, мĕн ђул, тата мĕнле пахалăхлă таварсем кирли çинђен малтанах саккас парса хурас йĕркене тепĕр хут пуçласа йарас;

у) промышлĕннăçпа копператси, тата райпотрепсойус склађĕсенђен айалти копперативсене вăйпах йурăхсăр таварсем пама тăнине пађах ђарас;

ы) районти орканисатсисем йенђен хăшпĕр таварсене малтанах хăйсем ваљђи йышăнса хурасси ку таранђђенех пĕтменнине, тата тавар фонђĕсене тивĕçсĕр çĕре йарса салатса пĕтернисем пулнине палăртса, пĕтĕм орканисатсисене, йалпосене, райпотрепсойуссене кирек мĕнле тавара та, кирек мĕнле çĕре йама та малтанах йышăнса хурассине пађах пĕтерме хушас. Таварсене тивĕçсĕр çĕре йарса пĕтернине хирĕç вирлĕн кĕрешсе пырса, пĕтĕм таварсене массăллă потрепиттĕлсем патне çитермелле.

## II. Колхос суту-илĕвĕпе вырăнти хатĕрлевсем çинђен.

Колхос суту-илĕвĕ нађар сарăлса пыни—вырăнсенђе ăнлантару ĕçне çителĕксĕр туса пынинђен килет, колхоссемпе колхоçнĕксене суту-илў тума орканисатсиленсе тухас ĕçе вырăнти орканисатсисем йенђен пулăшмаççĕ, колхос çиçтемипе Крайколхоссойусăн вăл тĕлĕшрен ĕççем питех те нађар (вăл тĕлĕшпе ĕçлекенсем çукпа пĕрех), хаксем тĕлĕшĕнђен ђылай районсенђе пăсса пĕтернисем, атминистратсиллĕ йĕркепе хак хурса панисем, пасара тухма ђарнисем пулнă (Шарйа, Мошка, Малмыш), суту-илўпе копператсин çиçтеми, раппођђисен хупă хăшпĕр копперативĕсем, тата колхоссен суту-илĕвĕ ваљђи промтаварсем кăларас ĕçе орканисатсилес çĕре пуçĕпех нађар хутшăннă.

1. Крайком пленăмĕ парттипе совет орканисатсисене пур районсенђе те, промышлĕннăçпа йал ђентăрĕсенђе, рапођђи поççолккисенђе, пысăк йалсенђе пасарсем тумал-

ла, пасарсем ваљљи суту-илӳ тума лайăх вырăнсем уйăрса памалла, суту-илӳ ĕçне орканисатсилеме пулăшмалла (тарасасем, аш-какай касмалли вырăнсем; çав шутах промтаварсен суту-илĕвне вăйлатса йамалла, колхоçнĕксемпе уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсене куљттурăпа ытти ĕçсен йенђен пулăшмалла, столовăйсем, ђайнăйсем, хваттере кĕмелли, лашасене кăкарса тăратмалли вырăнсем, куљттурăпа массăллă ĕçсем).

2. Колхос суту-илĕвĕпе хăйсене ваљљи протуксисем хатĕрлес ĕç пуринђен ытла стантсăллă вырăнсенђе пулса пынине, тата, çавăн пирки, шалти вырăнсем пасар суту-илĕвĕн ку таранђђенех сахал хутшăннине палăртса, Крайком пленăмĕ йалти потрепкопператсисем, пĕрле апатланатарас ĕçĕн тресĕсем, рапођђисен хупă копперäттивĕсем, рапођђисен копператтивĕсем, патшалăх суту-илӳ орканисатсисем йенђен протуктăсене инçери вырăнсенђе, колхоссемпе колхоçнĕксем, уйрăм хуçалăхлă ĕçхресђенĕсем хушшинђе хатĕрлеме хушать; ку ĕçе пуринђен ытла патшалăх хатĕрлевĕнђен пађах, йе пăртакăн хăтарнă районсенђе туса пымалла.

Крайком çакăн çинђен асăрхаттарса хурать: вырăнти парттипе совет орканисатсисен ĕçĕсене партти Тĕпкомĕпе Халăх кăмиссарĕсен канашĕ колхос суту-илĕвĕ çинђен йышăннă решшенисене пурнăçа кĕртсе пыни çинђен хак парасси—вĕсем патшалăх хатĕрлев планне вăхăтра, тата пĕтĕмпех тултарнă тăрăх тата, ăна тултарса, колхос суту-илĕвне тата самосакотовккăна сарса ӳстернĕ тăрăх пулать.

3. Пасар хакĕсене йĕркелеме пултармалла тата йӳнетмелле тăвас тĕлĕшпе Крайпотрепсойуса, Крайколхоссойуса, Корта, Кустпромторка тата колхоссен уйрăм ђентăрĕсене колхоссен пасарĕсенђе йалхуçалăх протуксисене потрепиттĕл копператси, патшалăх суту-илӳ, колхоссен уйрăм ђентăрĕсен Çĕрĕç кăмиссариатне кĕрекен пĕрлешӳсемпе Снаптени кăмиссариађĕн çиçтемисене кĕрекен лавккасем урлă сутас ĕçе пысăккăн орканисатсилеме хушас.

Совет оркăнĕсемпе влаçăн ытти оркăнĕсене вăйланса кайнă спеккуљатсийе хирĕç кĕрешĕве Совет сойус Тĕп-

ĕçтăвкомĕпе ХКК авкустăн 22-мĕшĕнђе йышăннă решшени тăрăх вирлĕн кĕрешсе пыма хушас.

4. Пленăм колхос суту-илĕвне вăйлатса йамалла меслетсенђен пĕри—рапођђисен хупă копперативĕсемпе претприйаттисенђи рапођђисене колхоссемпе çыхăну тытас ĕçпе колхос суту-илĕвне орканисатсилес ĕçе пысăккăн хутшăнтарни, уйрăмăн илсен—претприйаттисем çумĕнђе лавккасем уçни промтаварсем сутас ĕçе орканисатсилени пулаť, тесе шутлаť. Пленăм Крайком пўровĕ харпăрхăйсен хатĕрлевне иртерме, тата колхос суту-илĕвне орканисатсилес ĕçе пулăшу пама вырăнсене 500 рапођђи йама йышăннине ырлаť.

### III. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çинђен.

1. Партти Крайкомĕн пўровĕ йалсене куллен кирлĕ таварсем йарасси çинђен авкустăн 5-мĕшĕнђе йышăннă ĕçсене ырлас, тата иккĕмĕш çур çуллăхра план çумне хушса татах та 41 мĕлйун тенкĕлĕх куллен кирлĕ таварсем туса кăларас плана çирĕплетес.

Промышлĕннăç претприйаттисемпе алăсталăх копператсин ертелĕсем ђылайĕшĕ куллен кирлĕ таварсем тăвас прокрамăна пурнăçа питех те нађар кĕртсе пынине палăртса, пленăм кашни партти профсойус, хуçалăхпа копператси орканисатси умне йалсене таварсене çитересси çине, тата куллен кирлĕ таварсем туса кăларас прокрамăна пурнăçа кĕртесси çине уйрăмах хыттăн çавăрăнса пăхас сатађ лартаť.

2. Рапођђисен кашни хупă копперативĕн, рапођђисен копперативĕн, йалпон, патшалăх суту-илў орканисатсин, парттипе совет орканисатсисен кулленхи районти тавар çаврăнăçне орканисатсилес, тĕрлĕ таварсен шутне ўстересси çине хыттăн пăхмалла. Ку тĕлĕшпе алăсталăх ертелĕсенђен, промколхоссенђен тĕп плантан ытлашши алăсталăх таварĕсене илсе тăмалла, ертелсен уйрăм происвотствăсене сарма пулăшмалла.

3. Крайком пўровĕ алăсталăх копператсин ĕçĕсене çĕнетес тĕлĕшпе йышăннă решшенине ырласа, пленăм партти орканисатсисене пуринђен ытла Павлăвски,

Веткă, Вађ, Семенăвски орканисатсисене вăл кăтартусене хăвăртрах пурнăҫа кĕртме хушаť.

## IV. Рапођђисен снапшени, тата претприйаттисен ҫумĕнђе ҫимĕҫ хатĕрлес ĕҫе тăвасси ҫинђен.

Пленăм кашни хапрăкпа савăт ҫумĕнђи рапођђи копператтивĕн, партти, совет, тата профсойус орканисатсин снапшени ĕҫĕнђи тĕп сатађ--хăйсен ҫимĕҫ пахђисем тăвасси, сысна, кролĕк усрамалли, пулăсем ĕрђетмелли вырăнсем тата ытти йалхуҫалăх претприйаттисем тăвасси пулаť тесе шутлаť.

Йалхуҫалăх претприйаттисем орканисатсилес пĕтĕм плана рапођђисем хушшинђе сӳтсе-йавмалла. Кашни рапођђи копператси хуҫалăхĕ мĕн пысăккĕш пулассине, вăл мĕн ђул протукси пама пултарнине, протуксине мĕнле илсе усă курмаллине пĕлсе тăтăр. Ку тĕлĕшпе савăтсенђи партти, пуринђен ытла профсойус орканисатсисен хăйсен пленăмĕсенђе ђас-ђасах копператси хуҫалăхĕсем мĕнле ĕҫлени ҫинђен сӳтсе йавмалла, вăл вăхăтрах рапођђисен активне (вĕсем хăйсем килĕшнипе тата кашни рапођђи пĕлӳне шута илсе) контрођ тăвас ĕҫе, тата копператсине уйрăм ĕҫре пулăшу парас ĕҫе орканисатсилемелле.

1. Крайпотрепсойуспа крайри профсойуссен советне пĕр уйăх хушшинђе колхоссенђи, рапођђисен ĕҫ пахалăхне хăпарма копператси хуҫалăхĕн таварлăхне пысăклатма интереслентерекен майсем хатĕрлеме хушас.

2. Претприйаттисем ҫумĕнђе йалхуҫалăх протуксисем тăвас ĕҫе массăна орканисатсилес ҫĕрте ђылай савăтсенђе ҫимĕҫ конферентсисем туса иртернине аван ĕҫ тесе шутласа, Крайком пленăмĕ савăтсемпе районсенђи орканисатсисене уйрăмах—ҫимĕҫ конферентсисен решшенисене пурнăҫа кĕртсе пынине--кулленех контрођ туса пыма (контрођ постисем, тата ытти те) хушаť, конферентси решшенисене пурнăҫа мĕнле кĕртсе пыни ҫинђен рапођђисен хупă копператтивĕсен, хапрăкпа савăт копператсисен отђођĕсене ђас-ђасах итлесе тăмалла.

3. Пленăм хытарсах ҫапла калаť: тырпул хатĕрлевĕн патшалăх планне ђылайах ђакарнă пирки, тата колхос

суту-илĕвне вăйлатса пынă пирки, рапоҫҫисене хĕллехипе ҫуркуннехи вăхăтра пахҫа ҫимĕҫсем тăратас ĕҫре вырăнти хатĕрлевсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ тет; ҫавăн пирки те вырăнти орканисатсисене ҫакăн ҫинҫен сыхлантарса хурат: вырăнти хатĕрлевсем тума кирлĕ ĕҫсене туманни савăтсенҫи рапоҫҫисен снапшенинҫе пĕтерсе лартат; ĕҫе ҫакăн патне ҫитернине вырăнти орканисатсисем нимĕн те туман, оппортунисла ĕҫленĕ тесе шутламалла пулат.

Пленăм пахҫа-ҫимĕҫ планĕсене вăхăтра, тата пĕтĕмпех тултарассишĕн, вĕсене вырăнсене тĕплĕн турттарса каймалла, лайăх пăхса усрамалла тăвасшăн парттипе хуҫалăх, копператсипе профсойус, тата совет орканисатсисем ҫине уйрăмах пысăк ответлăх хурат. Вĕсене салатса, вăрласа пĕтерессине хирĕҫ питĕ хыттăн кĕрешсе пымалла.

Пленăм Ĕҫпе сыхлăх канашĕ ҫумĕнҫи хатĕрлев кăмиттеҫĕн упполномоҫҫăннăйне, Крайпотрепсойуса, рапоҫҫисен хупă копператгивĕсене, Корт-а халех вырăнти хатĕрлеве пуҫарса сарса йама хушат, йалхуҫалăхлă районсенҫи орканисатсисене вĕсене ĕҫре пулăшу пама хушат.

### V. Хулапа йалти потрепкопператсисене орканисатсипе хуҫалăх тĕлĕшĕнҫен ҫирĕплетесси.

Пленăм—хăшпĕр районсенҫи парттипе совет орканисатсисем совет суту-илĕвне вăйлатса пырас ыйтăва потрепкопператсин пĕтĕм ҫиҫтемине орканисатсипе хуҫалăх тĕлĕшĕнҫен ҫирĕплетес, тата копператсин пайшҫĕкĕсем (ҫленсем) хушшинҫе орканисатсипе массăллă ĕҫе сарса йарас ыйтусенҫен уйăрса илсе лартнине пысăк йăнăш тесе шутлат. Ку йăнăшсем тата ҫылай районсенҫи (Хĕрлĕ Паки, Кулепакки, Палахнă, Кстовă) партти орканисатсисем пайшҫĕк ҫинҫен маннинҫе те, ăна копператси ĕҫĕн тытăмне хутшăнтарманнинҫе, йалти копператтивсемпе макаҫăн ĕҫĕсем ҫине питех те ҫителĕксĕр пăхнинҫе те курăнат.

Крайком пленăмĕ ҫапла йышăнат:

1. Рапоҫҫисен хупă копператтивĕсен, рапоҫҫи коп-

ператтивĕсен, йалпосен, совхоссенђи рапођђи коппираттивĕсен, вăрман рапођђи тата торф кăларас çĕрти рапођђи копперативĕсен претçетаттĕлĕсене пайшђĕксен (ђленсен) пухăвĕсенђе суйламалла. Ђленсен пухăвĕсенђе сÿтсе-йавмасăр (конферентсиçемсĕр) копперативсен претçетаттĕлĕсене, правлени ђленĕсене, тата райпотрепсойуссен претçетаттĕлĕсене вырăнтан кăларма, йе вырăна лартма хутте мĕнле орканисатсисене те ђарас.

Рапођђипçе йалсенђи потрепкопператсисен правленисене, ревиçи комиççисене çĕнĕрен суйлас тĕлĕшпе, çулталăкри отђота çирĕплетме, усламсене тĕрлĕ çĕре пайлама, ĕç планĕсене тата тупăшпа расхут çметтисене çирĕплетме çулленех отђотлă пухусем тăвассине çĕнĕрен тытăнмалла. Вăхăт çитмесĕр рапођђисен хупă копперативĕсен, рапођђи копператтивĕсен, райпотрепсойуссен правленисемпе ревиçи комиççисене Крайпотрепсойуспа килĕшмесĕр суйлавсем тума пултараймаççĕ. Рапођђисен копперативĕсемпе йалти копперативсен отђотпа суйлав пухăвĕсене кăçалхи çул нойапĕр уйăхĕнђеиртерес.

2. Крайпотрепсойуспа партти райкомсене икĕ уйăх хушшинђи вăхăтра йалпосене вĕсене тытса тăма май пуррипе çукки йенђен пăхса тухма хушас; уйрăм вак, тупăшсăр йалпосене пĕрлештерме те йураť, анђах йалпосене пĕрлештерессине кашнинђех пайшђĕксен пухăвĕпе килĕшсе тумалла.

3. Копператсин массăллă ĕçне тĕпренех çĕнетес шутпа районри партти кăмиттеђĕсене, профсойус, потрепкопператси оркăнĕсене çаксене тума хушас:

а) пур тсехсенђе, совхоссенђе, МТС-сенђе, колхос сенђе, уђрештенисенђе копператси пÿровĕсем тумалла. Ку пÿрон уйрăм ђленĕсем çине уйрăм ĕçсем (копператсине çĕнĕрен ђленсем кĕртес, укçа-тенкĕ пухас, хатĕрлевсем тăвас, колхос суту-илĕвĕ йалхуçалăх претприйаттисем, тата ытти те) хурас, копператси пÿроне пулăшма пайшђĕксен активне орканисатсилемелле;

у) лавккасен кулленхи ĕçсене контрођ туса пыма, пайшђĕксем суйланипе, кашни лавкка пуçнех лавкка

комиççисем орканисатсилемелле; вăл комиççисене ытларах активлă хĕрарăмсене кĕртмелле. Копператси пӳро · вĕпе лавкка комиççисем—копператси активĕсем копператсин ĕçне йĕркелес çĕрте ĕçлĕхлĕ помошнĕксем пулђђăр тесе, вĕсен хушшинђи активсене малашнехи вăхăтра потрепкопператсин суту-илӳ тытăмне лартма хатĕрлеме май пулђђăр тесе, вĕсене копператсипе профсойус орканисатсисен ĕçре кулленех кăтартса, тата пулăшса пымалла;

ы) копператсин хуçалăхпа массăллă ĕçне сарса йарас çĕрте пулăшу парассине тата инструксилес ĕçе орканисатсилемелле. Ку тĕлĕшпе Крайпотрепсойуса инструктăрсен аппаратне вăйлатма хушас.

4. Пленăм потрепкопператси çиçтеми тăрăх уйрăмăнах хаçат кăларма кирлине палăртаť, ку тĕлĕшпе Крайком пӳровне Крайпотрепсойус 1932-мĕш çулхи октапĕрĕн 1-ĕ тĕлне хаçат кăларма пуçлас шутпа орканисатсиллĕ ĕçсене туса пыма хушаť.

5. Потрепкопператсин вырăнти оркăнĕсене, пуринђен ытла—йалпопа рапођђисен хупă копператсисене укçатенкĕ тĕлĕшĕнђен çирĕплетес, укçа-тенкĕ хытă тыткалассине пурнăçа кĕртес тесе пленăм çакна йышăнаť:

а) рапођђисен кашни хупă копператтивĕнђе, рапођђисен копператтивĕнђе, йалпора, вăрман ĕçĕнђе ĕçлекен рапођђисен копператсинђе, тата райпотрепсойусра пайшђĕксен пухăвĕсенђе (конферентсинђе) çирĕплетнĕ тупăшсемпе расхутсен çметти пулмалла. Ревиçи комиççисен çметтăна туни çинђен, тата вăл пурнăçа йепле кĕни çинђен хăйĕн сăмахне каламалла, унăн çинђен пайшђĕксен пухăвĕсенђе токлатсем туса памалла. Копператси правленисем кирлĕ мар çĕре укçа тăкнине, уншăн кам айăплă—вăл расхута çавăн çине хумалла, вăл айăплă çынсене пайшђĕксен пухăвĕсенђе (конферентсисенђе) вырăнсенђен кăларса, тата сута парса айăпламалла;

у) Крайпотрепсойус 3-мĕш кварттăлтан пуçласа йалпосенђе ђлейсенђен пай укçи пухнинђен 80 прођђăнне хăйсем патĕнђех хăвармалла тунине ырлас. Крайпотрепсойуса пĕр уйăх хушшинђе Ђентрсойуспа пĕрле—коп-

ператсинђи услама мĕнле çĕре пайласа йамалли çинђен калаçса татăлма хушас. Ку ĕçре те усламран ытларах укçа-тенкине потрепкопператсин вырăнти пайĕсенђе хăвармаллине асра тытмалла;

ы) укçа-тенкĕ пухас ĕç нађар пынине палăртса, пĕтĕм потрепкопператси орканисатсисен умне укçа-тенкĕ пухас плана пĕтĕмпех пурнăçа кĕртес, пуринђен ытла хăйсен ĕçне вăйлатма йулакан пай укçине пухас, çав вăхăтрах копператсине çĕнĕ ђленсем кĕртес сатађ тăратас. Крайпотрепсойуса финанс планне пурнăçа кĕртсе пырайман вырăнти орканисатсисене финанс тата екkономĕк тĕлĕшпе хĕтĕртсе пыма хушас;

ă) çметтăпа тата пайщђĕксен пухăвĕпе пăхман копператсин укçа-тенкине кирек мĕнле орканисатсисене те копператсирен туртса илме ђарас. Крайри патшалăх панкĕн кантурне—вырăнти копператси орканисатсисен расђотлă сђођĕсем çинђен копператсин правленисемпе килĕшмесĕрех укçа-тенкĕ ытти орканисатсисен сђођĕ çине куçарма ирĕк памалла мар тума хушас;

е) Крайри потрепкопператсин çиçтемине 3-мĕшпе 4-мĕш кварттăлсем хушшинђе пĕтĕм промтаварсем илме панă, срук тухнă аванссем çине таварсем парса татма хушас.

## VI. Катăрсем.

1. Партти, совет, тата суту-илĕвĕпе копператси орканисатсисен пысăк сатађĕ—копператсипе патшалăх суту-илӳ аппарађĕсене клас тăшманĕпе пӳрократла елементсенђен тасатасси пулаť. Анђах пленăм партти, совет, профсойус тата копператси орканисатсисене суту-илӳ ĕçĕнђе ĕçлекенсене сăлтавсăр вырăнтан кăларса хăтланасран асăрханма хушаť. Ку орканисатсисен сатаđĕ—суту-илӳ ĕçĕнђе ĕçлекенсен пурнăç йăлине лайăхлатас, технĕккăллă пĕлӳне хăпартас, политтĕкла пĕлӳне вăйлатас тата ĕçре пулăшу парса пырасси пулаť.

2. Йалпо претçетаттĕлсен йышне вăйлатас шутпа районра ĕçлекен комуниссемпе парттире тăман йалпо ĕçне лайăх лартма пултаракансене 150 çын йалпо претçетаттĕлĕсене йарас. Крайкомăн çынсене тĕрлĕ

вырӑнсене ӗҫе йаракан пайне ҫак решшенине пурнӑҫа кӗртнине сӑнаса пыма хушаҫ.

3. Нумай вырӑнсенҙе райснапсем хӑйсен тӗп ӗҫне, тавар илсе тӑратас ӗҫе орканисатсилес, совет суту-илӗвне сарас, таварсене потрепиттӗл патне тӗрӗс ҫитерес ӗҫсене пурнӑҫа кӗртменнине палӑртса, райкомсемпе Крайснапа райснапсен совет суту-илӗвне сарас ҫӗрти хӑйсен тӗп ӗҫӗсене пурнӑҫлама кирлӗ условисене туса пама хушас.

Райкомсен, райснапсен саветушҙисене Крайснаппа тата Крайкомӑн катӑр пайӗпе килӗшмесӗрех вырӑнтан кӑларма ҙарас.

4. Кӗске вӑхӑтлӑ курссем урлӑ суту-илӳпе коппературатсинҙе ӗҫлекенсене хатӗрлес ӗҫӗн пахалӑхӗ ытла та наҙаррине палӑртса, Крайпотрепсойуспа Крайснапа катӑрсем хатӗрлес ӗҫре, пуринҙен ытла, пахалӑха хӑпартасси ҫине ҫаврӑнса пӑхма хушас. Ку тӗлӗшпе курссенҙе вӗрентес вӑхӑта тӑсмалла, лайӑхрах вӗрентекенсем тупмалла, кирлӗ кӗнекесемпе ытти вӗренӳ хатӗрӗсем пулмалла, вӗренекенсене тӑрантарассипе снапшенине аванлатмалла. Крайпотрепсойусӑн 3-мӗшпе 4-мӗш кварттӑлсенҙе курссем урлӑ 675 ҫын вӗрентсе кӑлармаллине ҫирӗплетес.

5. Пленӑм Крайпотрепсойуса тата суту-илӳпе коппературатсинҙе ӗҫлекенсен сойусӗн Крайкомне пӗр уйӑх хушшинҙе — лавккасенҙе, пуринҙен ытла йалсенҙи лавккасенҙе ӗҫлекенсен пурнӑҫне лайӑхлатмалли, вӗсен ӗҫ укҫине хӑпартмалли йӗркене туса пурнӑҫа кӗртме хушас. Ку вӑхӑтра суту-илӳ претприйаттин тупӑш парасси кирлӗ виҫере йулмалла.

Крайком пленӑмӗ партти, совет, профсойус, хуҫалӑх тата копператси орканисатсисен умне потрепкоппературатсин уйрӑм пайсене, пуринҙен ытла макаҫӗна, лавккана, йалппона, рапоҙҙисен хупӑ копператсисене орканисатсипе хуҫалӑх тӗлӗшӗнҙен ҫирӗплетес тӗлӗшпе кулленех ӗҫлесе пырас сатаҙа тӑратас. Пӗтӗм орканисатсисем ӗҫре ҙӑн-ҙӑн пулӑшу парса пырсан, атминистратсилессилле хӑтланнипе йе камантӑ тунипе мар, пайшҙӗксене ӗҫе мопилисатсиленипе парттин ҫулйӗрне пӑсакансемпе—

пӯринҫен ытла сылтам оппортунисампа кӗрешсе, копператси аппаратӗнҫен клас тăшманӗпе пӯрократсене хăваласа кăларса пырсан, копператси пайшҫӗксен пултарулăхӗ çинҫе тăракан, таварсене потрепиттӗл патне çитерессишӗн кӗрешекен, тавар илсе тăратас ӗçе вăйлăлатас çӗрте крайпа районра пӗтӗм майсемпе усă курма пултаракан орканисатси пулса тăрат,—совет суту-илӗвӗн ҫăнҫăн орканисаттăрӗ пулат

---

## ПАРТТИН МАССĂЛЛĂ ЁҪĔСЕМ ҪИНЂЕН.

**Ђерноређĕнски химкăмпинат парткомĕ, Сормăвăри пăравус савăтĕнђи партком, Уршум райкомĕн токлађĕсем, тата Крайком оркпайĕн сотоклађĕ тăрăх йышăннă ресолјутси.**

Ђерноређĕнски химкăмпинатĕнђи, тата „Хĕрлĕ Сормăвă“ савăтсенђи партти кăмиттеђĕсен, Уршум райкомĕн токлађĕсене, тата Крайком оркпайĕн сотоклатне сӳтсе йавнă хыҫҫăн, Крайком пленăмĕ парттин ҫак орканисатсисенђе партти ăшĕнђи ыйтусемпе массăллă ĕҫсем йенне Тĕпкомпа Крайком кăтартнă таран ҫаврăнса тăрайман тесе палăртаҭ. Пленăм, крайри ытти парторканисатсине хушнă пекех, ҫак парторканисатсисене те хăйсен ĕҫĕнђе парттиллĕ-массăллă ыйтусене тата Какановиђ йулташ сăмахĕсене куллен-кун пурнăҫа кĕртсе пыраcсине тĕп вырăна хума хушаҭ.

Крайком пленăмĕ ҫапла йышăнаҭ:

### 1. Ђерноређĕнски химкăмпинатри партком тĕлĕшпе.

Парттин Ђерноређĕнски химкăмпинатĕнђи орканисатсийĕ Сталин йултащăн 6 условине, тата партти пĕрпуҫлăх тăвасси ҫинђен панă кăтартусене пурнăҫа кĕртсе пыма массăсене мопилисатсилени урлă 1932-мĕш ҫулта промфинплана пахалăхпа хисеп йенђен те пĕрмайах ытлашшипе тултарса пынă. Ҫав ҫитĕнӳсем рапођђисене пурне те пекех сотсиалисăмла ăмăртăва хутшăнтарнипе пулнă; происвотствăллă прикатăсене пурне те пекех хуҫалăх рашђођĕ ҫине куҫарнă; рапођђисен, иншенерсемпе технĕксен тĕп массисене савăт ҫумне ҫирĕплетнĕ. Партти орканисатси парттийтсăсене происвотствăра тĕрĕс вырнаҫтарса тухса, вĕсем ҫумне

партти активне çирĕплетни урлă тĕпре пыракан тсех йаҍейккисене тĕреклетсе çитерне. Партти крупписене йертсе пырассине, тата каçхипе çĕрлехи çменăсем хушшинҍе ĕçлессине лайăхлатнă.

Çакăнпа пĕрлех, Крайри кăмиттетăн пленăмĕ парторканисатсин воçпиттани парас ĕçĕсем çителĕклĕ пулса пырайман, тесе шутлаť. Парторканисатси политтĕкла воçпиттани парас ĕçпе кашни комунисах çавăрса илейман. Уйрăмăнах, ку тĕлĕшпе партти кăнтитаҍĕсем хушшинҍе ĕç йапăх пыраť (826 кăнтитатран 216-шĕн кăнтитатра тăрас вăхăҍĕ иртсе кайнă). Партти крупписенҍен ҍылайăшĕсене çирĕплетсе çитереймен, вĕсем хаљ те питĕ йапăх ĕçлесе пыраççĕ (Орехxăв, Кошҍейăв тата ыт. парткрупписем). Вĕсене тсех йаҍейккисемпе партти кăмиттеҍĕ куллен кун çителĕклĕ йертсе пырайман. **Партти орканисатси политтĕкла шухăшсемпе пĕтĕм рапоҍҍисенех çавăрса илеймен.** Йулашки вăхăтра партти орканисатсине ӳстерес йенĕпе ĕçлесси ҍылай наҍарланнă, çавăн пирки те ӳсĕм ҍарăнса ларасси патне çитнĕ. Рапоҍҍисем хушшинҍе çителĕклĕ таран ĕçлесе пырайман, сăмахран, кăмпинатри ватă рапоҍҍисем хушшинҍе ĕç йапăх пыраť.

Крайри кăмиттетăн пленăмĕ Ҍернореҍĕнски химкăмпинатĕнҍи партти кăмиттеҍĕн умĕнҍе çакăн пек тĕп сатаҍĕсем тăнине кăтартса параť:

Хаљ тĕп вырăнта тăракан тсехри йаҍейккăна пĕтĕм вăйпа çирĕплетсе пымалла, тата тсехри актива, тсехри йаҍеккăна куллен кун пулăшса йертсе пырассине йĕркелесе çитермелле.

Крайком, крупорксене ĕçре куллен-кун пулăшса пырассине орканисатсилеме, йаҍекккă пӳровĕсенҍе, партком пленăмĕсенҍе крупорксен токлаҍĕсене итлемелле тума, ҍи лайăх ĕçлекен крупорксен (Сутăв, Лопатин, Корнилăв т. ыт. йулташсен) ĕçĕсем çинҍен пысăккăн çутатса пыма вĕсен оппăҍĕсене кăмпинатри пĕтĕм крупорксем патне çитерме хушаť. Тсехри, савăтри, районри, крайри пиҍетре парткруппăсен ĕçĕсем çинҍен куллен кун çутатса тăрассине йĕркелесе йамалла. Круп-

пăри парторксене пĕрмайах улшăнса тăрас йĕркене пĕтерсе лартмалла.

**Кашни комуниса,** уйрăмăнах партти кăнтитатне маркçисла-ленинла вĕрентӳпе çавăрса илме, тата парттийăтсăсене пурне те партти ĕçне хастарлăн хутшăнтарма партти кăтартса панине пурнăçа кĕртсе пымалла.

Крайком пленăмĕ кашни комуниса парттин куллен кунхи ĕçĕнђе йалан тĕрĕслессине, вĕсене хăйсен ĕçĕнђе пулăшса пырассине орканисатсилеме кĕске вăхăтра партти кăнтитађĕсене ђлена куçарма, орканисатсине происвотствăри ђи лайăх утарнĕксен шуђĕпе ӳстерме хушаť.

**Кăмпинатри рапођђисене пурне те политтĕклĕ шухăшсемпе çавăрса илмелле,** вĕсем хушшинђе парттин ђи паллă решшенисемпе кăтартăвĕсем çинђен кунран кун ăнлантарса пымалла. Çак ĕçре уйрăм рапођђисем хушшинђи кайа йулнăлăха, парттишĕн йут туртăмсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымалла. Массăллă ĕçе происвотствăра кăна мар, рапођђисен опшђешиттисенђе те, уйрăмăнах—параксенђе орканисатсилесе çитермелле. Тсехри хĕрлĕ кĕтессен, куђттур çурђĕсен, тата савăтри „Хĕрлĕ химĕк" хаçатăн ĕçĕсене лайăхлатса çитермелле.

Пленăм райкомпа кăмпинатри партком, тата пĕтĕм орканисатси умне пĕртен пĕр тĕп сатађ выранне—рапођђисен пурнăçпа йăлана, килçуртпа куђттур условисене йусассишĕн выранти протовођстви никĕсне пысăклатассишĕн, савăтри столовăйсемпе пĕтĕм снапшени ĕçне лайăхлатассишĕн кĕрешме партти орканисатсипе мĕн пур рапођђисене мопилисатсилессине лартаť.

## II. Сормăвăри паравоссем тăвакан савăтри партком тĕлĕшпе.

Сормăвăри паравоссем тăвакан савăтри партти орканисатси çак иртнĕ çулта политтĕк тĕлĕшĕнђен тĕрекленсе, хăй тавра рапођђисен массисене çирĕплетсе çитерђĕ. Савăтра парттире тăракансем 22,2 прођăнран 26 прођ. çитиђђен ӳснĕ, йертсе пыракан—паравос туса кăларакан тсехра парттийтсăсем 29 прођ. çитнĕ, çавăн пекех тата кăнтитатсене вĕрентессине лайăхлатнă.

Çапах та, пленăм савăтри орканисатсине паравоссем туса кăларас тĕлĕшпе савăг происвотствă планне тултарса пырайманни парттиллĕ-массăллă ĕçсем йапăх пулса пынинђен килнĕ тесе кăгартаť. Парткомăн ђи пысăк çитменлĕхĕ вăл—савăтăн кĕçĕн пайĕсенђе партти пĕрпуçлăх тăвассине, тата хуçалăх, партти, профсойус орканисатсисен хăшĕн мĕн тумаллине татăклăн уйăрса илме кăтартса панине пурнăçа кĕртейменни пулаť. Савăтри партти кăмиттеђĕ тсехри йађейккăсене çирĕплетме вĕсене, тата парткруппăсене, уйрăм комуниссене куллен кунхи ĕçре пулăшса, тĕрĕслесе пырассине орканисатсилеме пултарайман.

Крайком пленăмĕ пăравос тăвакан савăтри партти кăмиттетне çак çитменлĕхсене сирсе йарасси çине вирлĕн пăхма хушаť.

Крайком савăтри партти кăмиттетне партти круппиcен ĕçĕсене лайăхлатма, вĕсене ĕçре пулăшма, тата уйрăмăнах паравоссем пуçтаракан, пăс вĕретсе кăларакан тсехсенђи ђи малта пыракан круппăри парторксен—Маркеейĕв, Крепенкинă, Йелисарăв йулташсен оппăђĕсене савăтра çеç мар, пĕтĕм кăмпинатра сарма хушаť.

Савăтри партти орканисатсин йышне тĕплĕн вĕренсе тухмалла; партти ĕçне комуниссене пурне те вĕсен пултарулăхне, тата ĕçлес килнĕлĕхне шута илсе валеçсе памалла; парттийтсăсем мĕнле ĕçлесе пынине тĕрĕслес, вĕсене ĕçре пулăшас ĕçсене куллен кунах туса пымалла; **уйрăм комуниссене, вĕсем хăйсен ĕçĕсене мĕнле туса пыни çинђен пур ларăвĕсене, партти кăмиттеђĕн пленăмĕсене токлатсемпе ђĕнмелле.**

Паркома халех маркçисла-ленинла вĕренĕве вăйлатма хушас. Кунта ђи малтан марксисла-ленинла вĕренўре иртнĕ çулта пулнă çитменлĕхсене шута илсе тухмалла, тата ĕçлеме пултаракан проппакантиссене тупмалла. Пăравоссем пуçтаракан тсехра шкулсем-прикатăсем тунине ырласа, çав оппăта савăтпа кăмпинатăн мĕн пур тсехĕсене куçарма хушас, шкул-прикатăсен ĕçĕсем çинђен районри, тата крайри пиђетре çутатса памалла.

Çакна палăртас: савăтри уйрăм комуниссем хуш-

шинҫе парттине хирĕçле, оппортунисла шухăшсем палăрни пулнă (паравоссем пуçтаракан тсех, хурансен тсехĕ); çакăн пек шухăшсем сайом çырăннă вăхатра, тата массăна промфинплана тултарассишĕн тата пысăкрах хăвăртлăхсем илсе кĕрешме мопилисатсиленĕ вăхăтра палăртнă. Партти кăмиттетне çакнашкал шухăшсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пыма хушаť; çакăн пек фактсем тăрăх парттин савăтри пĕтĕм орканисатсисене кĕрешĕве мопилисатсилемелле.

**Массăллă-политтĕкла ĕçпе парттире тăман кашни уйрăм рапоҫҫине çавăрса илмелле.** Рапоҫҫисене парттин ҫи паллă кăтартăвĕсем çинҫен, йут патшалăхсем хушшинҫи лару-тăру мĕнле пыни çинҫе, пĕтĕм çĕршывпа пĕрле савăт тсехсем умĕнҫе мĕнле хуçалăхла сатаҫсем тăнине ăнлантарса парас ĕçе орканисатсилемелле. Партти катăрĕсен ҫи лайăх пайĕсенҫен акитколлективсем тумалла, хĕрлĕ кĕтессемпе пысăккăн усă курмалла, кăтартса парса акиттатсилес ĕçе (лосăнкăсем, плакатсем) лайăхлатмалла.

Партти кăмиттеҫĕпе савкома ватă паравоçнĕксен катăрĕ хушшинҫе ĕçлессине вăйлатма хушас, савăта пынă çамрăк рапоҫҫисене вĕрентес ĕçе происвотствăра нумай ĕçленĕ ватă рапоҫҫисене хутшăнтармалла.

Происвотствăна лайăхлатас, ăна планлас тĕлĕшпе Йаппони меттăҫĕсемпе ĕçлессине пысăк вырăна хурса, парткома паравос тăвакан савăтра Йаппони меттăҫĕсемпе усă курассишĕн массăллă ăнлантару ĕçне вăйлатма хушас, ку ĕçре Мурăмри паравос йусакан савăтри оппăтсемпе усă курмалла.

Крайри кăмиттет савăтри хуçалăхпа партти, тата профсойус орканисатсисене промфинплана тултарассишĕн, савăтăн пĕтĕм пайсенҫе хосрашҫотпа ĕçлесе пырассишĕн, опеслиҫкăпа пĕр танлăха пĕтерессишĕн, Сталин йулташăн ултă условине татăклăн пурнăç ласа пырассишĕн поҧшевикла кĕрешме хушаť. Çакăн пек тума парттиллĕ-массăллă ĕçе тĕплĕн лайăхлатнипе происвотствăра ĕçлекен кашни комунисах йертсе пыракан малти вырăна йышăнсан çеç пурнăçа кĕртсе çитерме пулаť.

## III. Парттин Уршум орканисатси тĕлĕшпе.

Крайком пленăмĕ Уршум орканисатсинҙе парттиллĕ-массăллă ĕç наҙар пулса пынă тесе шутлать.

Крайком пленăмĕ Уршум райкомĕпе пĕтĕм орканисатсийĕ уйрăм хуçалăхлă ĕçхресҙенсем хушшинҙе ĕçлессине тивĕçлипе хак паман, колхоссене орканисатсипе хуçалăх ĕçĕсем йенҙен тĕреклетес тĕлĕшпе йапăх ĕçленипе пĕрлех, районра коллективисатси ӳсĕмĕ те наҙар пырать. Районри орканисатсин ҙи пысăк çитменлĕхĕ—Тĕпкомпа Крайком колхоссенҙе парттийтсăсен вăйĕсене тĕрĕс тăратса тухасси çинҙен, происвотствăра ĕçлекен комуниссен йертсе пыракан малти вырăна йышăнса тăма кирли çинҙен кăтартса панисене пурнăçа кӳртсе пыманни пулать. Колхос происвотствинҙе ĕçлекен комуниссем ку таранҙҙенех пĕрерĕн çеç шутланаççĕ. Партти орканисатси колхоçнĕксен шутĕнҙен калама çук йапăх ӳссе пырать (2-мĕш кварттăлта парттине 8 колхоçнĕк кăна илнĕ). Райком колхосри происвотствă йаҙейкки тăвас тĕлĕшпе нимĕн те туман çеç те мар (районра ку таранҙҙен те колхос йаҙейкки пĕре те пулман), халиҙҙен орканисатсиленĕ йаҙейккăсем те 2—3-шер йалканашне те пĕре çеç пулнă. Районри кăмиттет 1931-мĕш çулхи нойапĕр уйăхĕнҙен вара йалти йаҙейккăсене пĕр ыйтупа та тĕрĕслемен, пĕр отҙот та итлемен. Райкомăн куллен кунхи ĕçĕнҙе упполномоҙҙăннăйсем урлă ĕçлесе пырасси ҙи малта пулнă. Вĕсем (упполномоҙҙăннăйсем) хуçалăхпа политтĕк тĕлĕшĕнҙи сатаҙсене пурнăçлас тĕлĕшре йаҙейккăсен вырăнҙе ĕçленĕ. Районри кăмиттет хăйĕн ĕçне хуçалăх ыйтăвĕсене сӳтсе-йавса, пурнăçа кĕртессипе тултарса лартнă, çакăн пирки райĕçтăвкомпа районри орканисатсисем хăйсен сăнне ҙылай çухатнă.

Уйрăм комуниссем хушшинҙе ĕçлесси, ҙленсене, уйрăмăнах кăнтитатсене, марксисла-ленинла вĕрентесси наҙар пулса пынă. Çавăнпа та 211 кăнтитатран 79-шĕн кăнтитатра тăрас вăхăҙĕ иртсе кайнă.

Уршум райкомĕн пленăм хушса хăварнипе çаксене-тумалла:

Çитес вăхăтрах уйрăм хуçалăхлă хресҌенсем хушшинҌе ĕçе çĕнетмелле, уйрăм хуçалăхлă ĕçхресҌенсем хушшинҌи ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе питех те татăклă ĕçсем туса иртермелле, уйрăмăн илсен—уйрăм хресҌенсен пухувĕсем туса иртермелле, уйрăм хуçалăхсемпе пĕрле колхоçнĕксен уçă пухăвĕсене туса иртермелле, Ҍухăнсем хушшинҌе ĕçлемелле, уйрăм хуçалăхлă хресҌенсен пухăвĕсенҌе лайăх ĕçлекен колхоссен токлаҌĕсене итлемелле, т. ыт. те, çакăн пек тунипе районри коллективисатсине ӳстерсе пымалла Уршум райкомĕ колхос политкунĕ туса иртернине ырлас.

Пысăк колхоссенҌе („Коминтерн", „Хĕрлĕ сухаç", „Росă ЉукçĕмпуркЉ", т. ыт.) происвотствăллă партйаҌейккăсемпе кăнтитатсен крупписене орканисатсилесе районри партйаҌеккăсен йышне урăхлатмалла, райкомăн тĕп ĕçĕ вырăнсенҌи колхос йаҌейккисене, кăнтитатсен крупписене тата уйрăм комуниссене куллен кун ĕçре пулăшса пырассинҌе пулмалла. Кашни комуниса пĕлсе çитме, кашни комуниса, уйрăмăнах кăнтитата вĕренӳпе çавăрса илсе, вĕсене парттин куллен кунхи ĕçне хутшăнтарса пымалла тăвас пулать. Райком пӳровĕсенҌе, пленăмĕсенҌе уйрăм йаҌейккăсен, кăнтитатсен крупписен тата уйрăм комуниссен ĕçĕсем çинҌен токлатсем итлемелле. Райком пӳровне Ҍылай хăйне тивĕçлĕ мар ĕçсенҌен хăтармалла.

Райĕçтăвком фраксин, тата районри ытти орканисатсисен хăйсене хушнă ĕçсемшĕн ответлăха пур майсемпе те хăпартса пымалла. Йалти комуниссене уҌрештенире, тата иккĕмĕш вырăнта тăракан пĕҌĕкрех ĕçсенҌен колхос происвотствине куçармалла. Районри Ҍентăртан 20 çын колхоссене ĕçлеме йамалла.

МТС йаҌейккин ĕçĕсене тĕпренех çĕнетмелле, унта пĕрпуçлăх тăвассине пăсса пынине пĕтермелле, йаҌейккăн пĕтĕм вăйне парттиллĕ-массăллă ĕçсем çине хумалла.

МТС йаҌейккине оппорлă йаҌейккă тумалла. Унăн оппăҌĕсене районри мĕн пур йаҌейккăсемшĕн кăтартуллă тăвассине пурнăçа кĕртмелле; унăн çывăхри колхос йаҌейккисемпе кăнтитатсен крупписене пулăшса пымалла.

Колхосри партйађейккăсене политтĕк тĕлĕшĕнђен хатĕрленсе çитнĕ çекреттарсем парса çирĕплетмелле, вĕсене пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçарса пынине пĕтермелле.

Крайком—Уршум орканисатсинђе партти ўсĕмĕ ытла та йапăх пулса пыраť тесе шутлаť, райкомăн партти йышне утарнĕк колхоçнĕксен шутĕнђен ўстерсе пымалла. Кăнтитатсене пĕлсе çитес тĕлĕшпе куллен кун ĕçлесе пырса, вĕсене куллен кун партти ĕçне хутшăнтарса тăрса, вĕсене вăхăтра ђлена куçарассине пурнăça кĕртмелле.

Уршум райкомне комсомол орканисатси çине йапăх пăхнине, ăна йертсе пырас тĕлĕшпе сахал ĕçленине кăтартса парас; çавăн пек нађар йертсе пынипе комсомол орканисатси районра иртерекен хуçалăхпа политтĕк, тата кулђтур ĕçсенђе питĕ кайа йулса пыраť. Уршум райкомне—комсомол орканисатсине партти йенђен йертсе пырасси çине уйрăмăнах тимлĕн пăхма, комсомолĕссене маркçисла-ленинла вĕрентўпе пĕтĕмпе çаварса илме, парттин кăтартăвĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешĕве хутшăнтарма хушас.

Крайком—Уршум райкомне телекаткă пухăвĕсене партти йађейккисемпе крупписен йышне çĕнетнĕ пек çĕнетсе йарса, колхоçнĕтсăсемпе уйрăм хуçалăхлă хресђенсем хушшинђи ĕçсене татăклăн вăйлатма хушаť.

Крайком—парттин Уршум орканисатсин парттиллĕ-массăллă ĕçсене лайăхатни, йалти массăсене партти политтĕкĕпе çаварса илни, парттин йертсе пырас ĕçне вăйлатни урлă колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшĕнђен тĕреклетессишĕн, йалхуçалăхне хăпартас ĕçсенђе пахалăха пысăклатассишĕн, кулакла, совет йĕркине хирĕç пыракан тăшманла елементсемпе кĕрешессине полђшевикла хастарлăхпа вăйлатса пыма хушаť.

* * *

Крайком пленăмĕ парттин крайри пур орканисатсисене те „рапођђи класĕ, рапођђисен, уйрăмăнах çамрăксем пурнăç ыйтăвĕсем пысăкăн ўснипе претприйаттисенђи партйађейккăсемпе комсомол йађейккисен сатађсен тата та пысăкланса кайни“ (Тĕпком 1932-мĕш

çулхи авкустăн 7-мĕшĕнҙе йышăннă решшенирен) çинҙен хытă асăрхаттарат. Пленăм парттин пĕтем орканисатсисене хапрăксемпе савăтсенҙи партти йаҙейккисен ĕçĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлеме хушат. Парт-массăлă ĕçе вăйлантни—промфинплана тултарас тĕлĕшпе кĕске вăхăтрах тĕпрен улшăну тума пулăшмалла.

Крайком пленăмĕ рапоҙҙисем хушшинҙе политтĕкла вĕрентĕве вăйлатнипе массăллă ĕçе тĕпрен çĕнетсе, вĕсене хуçалăхпа политтĕкла ыйтусем çинҙен куллен кунах ăнлантарса пырса, кĕске вăхăтрах рапоҙҙи массăсене политтĕк ĕçĕпе тата партти политтĕкĕпе çавăрса илме хушат.

Парттиллĕ-массăллă ĕçсене вăйлатас тĕлĕшпе уйрăмăнах парттин йалти орканисатсисем кайа йулса пыраççĕ. Крайком çакна палăртат: райкомсен тата парттин йалти пĕтĕм орканисатсисен ĕçĕсене ҙи малтан—районта парттиллĕ-массăллă, тата политтĕкла ĕçсем мĕнле пулса пыни тăрăх, колхосри партйаҙейккăсен ĕçĕсене йĕркелесе йани тăрăх, вĕсем урлă вара парттин район умĕнҙе хуçалăхпа политтĕк тĕлĕшĕнҙен тухса тăракан сатаҙсене мĕнле пурнăçласа пыни тăрăх хак памалла пулат.

Массăллă ĕçсемпе политтĕк тĕлĕшĕнҙен вĕрентес ĕçсене вăйлатса йани урлă парттине çĕнĕ çынсем илессине, тата парттийе малта пыракан рапоҙҙи утарнĕксен шутĕнҙен вăйлатассине тĕпренех лайăхлатмалла.

Парттин йалти орканисатсисене ўстерес ĕçре çаксене пурнăçа кĕртмелле: парттине колхоссене орканисатсипе хуçалăх тĕлĕшенҙен тĕреклетессишĕн малта кĕрешсе пыракан колхоçнĕк-утарнĕксене илмелле. Парттийтсăсем çук, йе вĕсем çителĕклĕ мар колхоссенҙе çак ĕç çине татах та вирлĕнрех пăхмалла.

Парттийтсăсене, парттире тăман çынсене маркçисла-ленинла вĕрентесси—парттин крайри орканисатсисенҙе пуринҙе те ҙи пысăк вырăн йышăнмалла. Пленăм кĕркуннехи, хĕллехи вăхăтри маркçисла-ленинла вĕренĕве халех хатĕрленме хушат. Теоретткла веренĕве куллен кунхи политтĕкла сатаҙсемпе, парттин лосăнкĕсемпе çыхăнса пымалла,—кунта уйрăмăнах партти кăнтитаҙĕ-

сене поҫшевикла вĕрентессине вăйлатмалла, вĕсене вăхăтра партти ҫленне куҫарса пымалла.

Пленăм партти активне вĕрентесси тата парттин вăтампа кĕҫĕн катăрĕсене—круппорксене, колхосри партйаҫейккă ҫекреттарĕсене хатĕрлес ĕҫе вăйлатма кирлине уйрăмах хыттăн кăтартса пырат. **Пленăм парттин Ҫулхула кăмиттеҫĕ йаҫейккă ҫекреттарĕсен Комвусне орканисатсиленине ырлат. Пленăм ҫакăн пек курссене крайри пысăк ҫентăрсенҫе пуринҫе те (Ишевскă, Веткă т. ыт. те) орканисатсилесси кирлĕ ĕҫ тесе шутлат.** Пленăм парттин пĕтĕм орканисатсисене партактива вĕрентмелли курссене нумайлатма хушат.

Пленăм парттин крайри орканисатсисене пурне те Тĕпкомпа Крайком партти кунне пур ҫĕрте те пĕр вăхăтра туса иртересси ҫинҫен панă кăтартусене пурнăҫа кĕртме хушат. Ана ваҫҫи партти йаҫейккисен пухăвĕсене хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе уйрăмăнах йалта тĕпрен улшăнусем тумалла.

Претприйаттисенҫе те, йалсенҫе те хуҫалăх, профсойус, тата партти орканисатсисем хушшинҫе ĕҫе тивĕҫлипе валеҫсе пырса, хуҫалăх орканисатсисенҫе пĕрпуҫлăх тăвассине татăклăн пурнăҫласа, советпа профсойус орканисатсисен вырăнне хăпартса, хаҫ хăш-пĕр вырăнсенҫе пулса пыракан пĕр-пĕрин вырăнне ĕҫлесе, йе пĕр ĕҫех ик ҫĕрлĕ туса пынине пĕтерсе пымалла.

Партти орканисатсисен районра та, йалсенҫе те партти катăрĕсене ҫирĕплетсе ҫитермелле. Катăрсем вырăнтан вырăна куҫнине, опеслиҫкăна, ответсăрлăха татăклăнах пĕтермелле.

Парттин кĕҫĕн оркăнĕсене ҫирĕплетсе пынипе районри орканисатсисем халиҫҫен уполномоҫҫăннăйсем урлă ĕҫлесе пынине пĕтермелле, пур майсемпе те партти йаҫейккисен, кĕҫĕн оркăнсен, йалканашсен, колхоссен ĕҫĕнҫи ответлăха хăпартса пымалла.

Пленăм парттин хулари орканисатсисен йалсемпе колхоссем ҫине тимлĕреххĕн ҫаврăнса пăхма кирлĕ тесе шутлат. Крайком пӳровĕ парттин йалти орканисатсисене ҫирĕплетме крайри хула ҫентăрĕсенҫен 500 комунис йама йышăннине ырлат.

Кунпа пĕрлех Крайком крайри йалхуçалăхлă районсене районра ĕçлекенсенђен пĕр кассине тӳрех колхоса ĕçлеме йама хушаť, партти вăйне—колхос производствинђе ĕçлекенсен ђăмăрне вăйлатас йенĕпе вырнаçтарса тухмалла.

Крайком пӳровĕ кăтартса панă пулсан та, колхосри парттире тăман актив хушшинђе ĕçлесси хаљ те йапăх вырăнта тăнине палăртса, пур райкомсене те çак ĕçе халех Крайком пӳровĕ решшенисем тăрăх вăйлатма хушас.

Крайком комсомолпа профсойус орканисатсисен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетес ĕç кайа йулса пынине пĕтерсе, претприйаттисемпе районсем умĕнђе тăракан хуçалăхлă-политтĕклă кампанисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес ĕçре комсомолпа профсойус орканисатсисен ответлăхĕпе пуçтарулăхне ӳстерме хушаť.

Пленăм „Нижегородская коммуна", „Советская деревня" оплăçри, районри тата савăтри хаçатсене парттин массăлă ĕçĕ çинђен, ĕçри оппăтсемпе улшăнасси çинђен çутатса тăрассине вăйлатма хушаť.

Пленăм парттин массăллă ĕçне çĕнетессинђе Крайкомăн оркинструктăрсен тата ытти пайĕсен парттин оплăçри, районри орканисатсисене оппeративлă ĕçпе пулăшусем парса йертсе пырассине вăйлатма хушаť.

Пленăм Крайкома „Партработник" шурнала лайăхлатма, ăна вăхăтра тухса тăмалла тума хушаť.

Пленăм парттин пур орканисатсисене те партти массăллă ĕçне урăхлатса çĕнетессине ăнăçуллăн пурнăçа кĕртессин условийĕ—парттин тĕп çулйĕрĕшĕн, хаљхи вăхăтра тĕп хăрушăлăх пулса тăракан сылтăм оппортунисăмпа тата „сулахай" пăрăнђăкпа татăклăн кĕрешни пулаť, тесе çакăн çине уйрăмах çавăрăнса пăхтараť.

Парттин тĕп çулйĕрне Урен, Мураш тата Полтен орканисатсисем оппортунисла пăснине крайри партти орканисатсисен пурин те хăйсен ĕçĕнђе тĕрĕс хисепе

илмелле. Çитменлĕхсемпе ĕçри йӑнӑшсене хирĕç самс криттĕккӑна татӑклӑн, хӑйуллӑн вӑйлатса пырса, парттиӊ мас сӑллӑ ĕçне кĕске вӑхӑтра урӑхлатса çĕнетсе çитерер . Ун урлӑ вара, крайра, сотсиалисӑм строиттĕлстви çĕне тата çĕнĕ сыпӑка хӑпартӑр.

---

Послано в производство 10-XI-1932 г.
Подписано к печати 31-X-1932 г.
Редактор А. Иванов.
Тех. редактор Демидов.

Уп. Чувашлита № 1472. Заказ № 1353. Тираж 4.100 экз.

Ст. ф. б. 130×210. Об'ем 1,75 п. л. 42.000 п. з. в. п. л.

Хакĕ 35 пус
Цена 35 коп.
ОП—1

Резолюции III-го пленума Нижегородского Крайкома ВКП (б)

Чувашиздат 1932 Чебоксары